1937
октябер
6
ЙУНКУН
230 (4742)-мĕш №

Пĕр №-рĕ 10 пус

19-мĕш çул тухать

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

Чăваш Коммунĕ

ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Тĕпĕçтăвкомĕн хаçачĕ

Редакципе кантур адресĕ:
Город Чебоксары,
ул. Володарского, 5, Дом Печати

ТЕЛЕФОНСЕМ: Редактăрăн 0—67
Ред. заместителĕн 0—88
Дежурнăйăн 6—23

Районри пичет тата ССР Союз Аслă Совечĕн суйлавĕсем

Суйлав кампанийин пуçламăшĕ таччăнах çывхарса килет. Крайсенче, облăçсенче, нацилĕ республикăсенче суйлав округĕсен тата участкисен чиккисене палăртас тĕлĕшпе хатĕрленӳ ĕçĕсем вĕçленсе пыраççĕ. Çĕршыв суйлава хатĕрленессин чи ответлă тапхăрĕ патне çывхарса пырать. Ку тапхăр вăл—округсем тăрăх Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн Аслă Совечĕн депутачĕн çӳлĕ ятне илтме тивĕçлĕ çынсен кандидатурисене тăратасси тата суйса ласси.

Çак тапхăрта пирĕн партин организацийĕ, агитацийĕ тата пропагандисла задачисем калама çук пысăккăн ӳсеççĕ. Пирĕн парти вăл, Сталинла Конституцире çырса хунă пек, „...ĕççыннисен социализмлă йĕркине тĕреклетсе малалла ӳстерессишĕн пыракан кĕрешӳвĕнче вĕсен малти отрячĕ пулса тăрать, ĕççыннисен мĕн пур организацийĕсене—общественнăйисене те, патшалăхлисене те—йертсе пыракан ышĕ пулса тăрать". Ленин—Сталин партийĕ суйлава хатĕрленес тĕлĕшпе кашни организаци çине пит пысăк задача хурать, большевикла пичетĕн çав калама çук пысăк задачăсене пурнăçа кĕртмелле пулать.

Аслă Совета депутатсем суйласси округсем тăрăх пулать, кашни округа темиçешер район кĕрет. Паллах ĕнтĕ, агитаци ĕçĕнче суйлав округĕсен центрĕсенче тухса тăракан районри хаçатсен чи пысăк ĕç тумалла пулать. Çакăн пек темиçе çĕр хаçатсен пĕтĕм суйлав кампанийĕнче агитаци ĕçĕ йĕнпе малта пулмалла. Партин облăçри тата крайри комитечĕсен кашниннех ĕнтĕ хăйсем умне çакăн пек ыйту лартас пулать: облăçри район хаçачĕсем, тата уйрăмăнах суйлав округĕсен центрĕсенче тухса тăракан хаçатсем, хăйсен политикăлла пит пысăк ролĕне пурнăçа кĕртме хатĕр-и?

Нумай районри хаçатсен, вăл шутрах суйлав округĕсен палăртса хунă центрĕсенче тухса тăракан хаçатсен те, халĕхи ĕçе çавна ĕненмĕ пултараймасть. Пĕтĕм пичетĕн чи малтанхи обязанноçĕ—йулашки уйăхсенче ĕççыннисен йышлă массисем хушшинче Сталинла Конституципе суйлав саккунне пропагандăласси, ăнлантарасси пулнă, вăл халĕ те çаплах пулать. Кунта вара, саккун çав тери усăмлă пулсан та, чылай хаçатсем вулакансен массисене, суйлавçăсен массисене пăтраштарса, йăнăш ăнлантарчĕç. Акă, сăмахран, Горьки облăçĕнчи Муром районĕнчи кашни кун тухакан пысăк хаçат „Муромский рабочий". Нумайăх та пулмасть Аслă Совета суйлама хатĕрленесси çинчен çырнă умстатйара хаçат çапла пĕлтерчĕ:

„Районра хутла пĕлмен çынсем виçĕ пин çынна яхăн шутланаççĕ. Вĕсене хут пĕлменлĕхе пĕтерме пулăшмасан, вĕсем хутла пĕлмен пирки суйлавсене хутшăнас правасăр тăрса юлаççĕ".

Çапла çырнипе „Муромский рабочий" редакцийĕ суйлав саккунĕн тĕп положенийĕсенчен пĕрине тĕлĕнмелле пăсса пĕтернĕ. Сталинла Конституцине пăхмасăрах, редакци перопа пĕрре чăрлаттарса хăйне майлă вĕренӳ цензĕ туса хунă, тата виçĕ пин гражданна суйлав прависемсĕр тăратса хăварассине, çав саккунсăр ĕçе, совета хирĕçле ĕçе декрет пек çирĕплетме хăтланнă. Çак хаçат Муромра тухса тăрать, вăл, паллах, суйлав округĕн центрĕ пулать пулмалла. Хаçат редакторĕ И. Кечетăв хăйне хăй ответсăрла тыткалани, хаçачĕн ĕçĕ йурăхсăрри—паллă мар-и ĕнтĕ?

Халĕх, темиçе кун хушшинчех, суйлав округĕсен центрĕсенче тухакан районти хаçат редакци редакторĕсемпе секретарĕсене тĕплĕн тĕрĕслесе тухса çирĕплетес пулать,—çакăн пек обязанноç тăрать халĕхи вăхăтра кашни обком, кашни крайком тата нацилĕ компартисен кашни Тĕпкомĕ умĕнче. Питĕ нумай районри хаçатсен редакторĕсем çуккине пăхах тӳсме çук. Хаçатсене уйăхĕ-уйăхĕпе „вридсем", „замсем", т. ыт. алă пусса кăлараççĕ. Районри редакторсем хушшинче партипе совет правительствин çулйĕрне пăсакан тăмçамкасем сахал мар; районри редакцисенче халĕ те тăшманла элементсем пур-ха, вĕсем партине хирĕçле, совета хирĕçле пропаганда тунă çĕрте редакторсен хатĕрленменлĕхĕпе тата пĕлменлĕхĕпе усă кураççĕ.

Редакцисенчен кăларса ывăтса пĕтермен халăх тăшманĕсем тем тĕрлĕ киревсĕр майсемпе те ĕçлеççĕ,—вĕсем çинчен манма юрамасть. Тăшмансен хаçатра ĕçлемели тĕп целĕсен шутĕнче, чи малтан, тăш-

пек туса, пропагандăлани пулать. Çапла, сăмахран, Барышникăв районĕнчи, Удмурт АССР, район хаçачĕ „Победа" „Халăх тăшманне тăрă шыв çине кăларнă" ятлă статйара йĕркеревех совета хирĕçле лозунгсем пичетлесе кăларнă. Çапла майпа редактăр заместителĕ Баженăв хаçатăн çав номĕрне халăх тăшманĕсен, пирĕн партин тата совет влаçĕн тăшманĕсен трибуни туса хунă. „Ленинская коммуна" хаçат çентаберĕн 25-мĕшĕнче кăларнă номĕрте контрреволюцилĕ ят панă статйа пичетлесе кăларнă. Унтанпа кунсем сахал мар иртрĕç, анчах Куйбышĕв обкомĕ районри хаçат редакторне йĕркене кĕртни курăнмасть-ха.

Тăшмансем совет хаçатне совета хирĕçле агитаци трибуни туса усă курма хăтланни,—„тăшманла идейăсене тăрă шыв çине кăларатпăр" тенипе витĕнсе, йе юрийех йăнăш пичетлесе, юрийех йăнăш çырса, „сăмах вырăна ларман" тесе т. ыт. майпа та,—тăшмансем çавăн пек хăтланни суйлав кампани пынă чухне пулатех-ха вăл. Парти оргăнĕсен пирвайхи обязанноçĕ—хаçат работникĕсен составне тĕрĕслесси, обллитсен кадрĕсене çирĕплетесси, халăх тăшманĕсем хаçат трибуни çине хĕсĕнсе кĕме пултаракан пур шăтăксене те питĕрсе хурасси пулать.

Обкомсен, крайкомсен, нацкомпарти Тĕп Комитечĕсен хаçат редакцисен редакторĕсене тата секретарĕсене тĕрĕслемелле, политика тĕлĕшĕпе шанчăклă мар çынсем вырăнне, партишĕн, унăн Сталинла Тĕп Комитечĕшĕн тата Совет правительствишĕн пĕтĕм чĕререн тăракан çынсене лартмалла—çакă пулать пичете суйлав кампанине хатĕрлес çĕрти тĕп задача. Ку вăл тĕп задача, чи пысăк задача, анчах пĕртенпĕр задача мар. Суйлав округĕсен центрсенче тухса тăракан хаçатсене обкомсен тата крайкомсен материаллă, техникăллă пулăшу та парас пулать. Намăс мар-и вара çав хаçатсенчен нумайăшĕ хаçицченех таса мар, тăвăр çуртсенче вырнаçса пураççĕ, вĕсен пичетлемели машинка та çук. Тата, чи йăвăрри, вĕсем пит чухăн оборудованиллĕ типографисенче тухса тăраççĕ, вĕсенче час-часах хаçат кăларма чи кирлĕ шрифтсем те, машинсен запаслă пайĕсем те т. ыт. те çук. Çавăнпа вăл хаçатсем начар, шупка, тирпейлĕ мар, вулама лайăх мар пулаççĕ те. Çакнашкал пулнипе текех килĕшсе пурăнма май çук. Уйрăмах халĕ, социализмла демократизм пит те анлăн чечекленсе пынă, ĕççыннисен сарлака массисен политикăлла хастарлăхĕ вăйлăн ӳссе пынă чухне çавна чатма май çук. Нумай хаçатсем шупка, имшер пулни суйлав кампани вăхăтĕнче тата ытларах сисĕнĕ. Сăмахран, Усольск (Хĕвелтухăç Çĕпĕр облăçĕ) районĕнчи хаçат пекки.

Усольскри хаçат редакцийĕ массăсенчен уйрăлса кайни анекдотри виçĕнех çитнĕ. Хăйĕн Усольск районĕнчи ялсенчи пупсен киревсĕр ĕçĕсем çинчен çырнă заметкăна та хаçат... Иркутскинчен, ТАСС облăçри уйрăмĕнчен илнĕ. Ку вăл—хаçат çав тери пĕтсе ларни пулать. Çавăн пек хаçата кăларма та юрамасть, ун пек хаçатăн, уйрăмах суйлав кампани вăхăтĕнче, пурăнма та права çук. Мĕншĕн тесен, большевикла прессăн паллă уйрăмлăхĕ ялалнах массăсемпе тачă çыхăну тытни, массăсен пурнăçĕпе шухăшĕсене хаçат пĕрмаях пĕлсе тăни, ĕçхалăхĕн шухăшĕсемпе ĕмĕчĕсене палăртса тăни пулнă.

Пирĕн çĕршыври вунпилĕк миллионла ĕççыннисен, ССР Союзĕнчи пур халăхсен пурнăçĕ çутă, илемлĕ, савăнăçлă, телейлĕ пулса тăчĕ. Сталинла тапхăр ĕççыннисен творчествăлă пултарулăхне çав тери çӳле çĕклере, кун пекки етемлĕх пурнăçĕн иртнĕ тапхăрĕсенче пĕринче те пулман, пулма та пултараймăн. Çак çĕкленӳ халĕ, пысăк событисем умĕн—ССР Союзĕн Аслă Совечĕн пĕрремĕш суйлавĕ умĕн уйрăмах пысăккăн палăрать.

Пирĕн пĕтĕм пичет, уйрăмах суйлав округĕн центрĕнче тухакан кашни район хаçачĕ, парти умĕнчи екзамĕн тытать, çĕршыв умĕнче екзамĕн тытать. Политикăлла пиçсе çитнине, политикăлла сыхăлăхлине, коллективлă организатăрăн, большевисăм агитатăрĕн, пропагандисăн аслă ятне тивĕçлĕ пулнине кăтартмали екзамĕн пулать. Çак екзамĕна тивĕçлипе тытмалла!—пирĕн аслă партин кашни комитечĕн халĕ чи пирвай тăрăшса туса пымалисенчен пĕри çакă пулать.

(Октаберĕн 5-мĕшĕнче тухнă

Леваневски самолетне шырама

Хамăра панă заданине пурнăçа кĕртессине шансах тăратпăр

Партипе правительствă заданийĕ тăрăх, нумай моторлă тăватă „АНТ-6" сывлăш карапĕсенчен тăракан çĕнĕ отрйад организациленĕ. Ку отрйад „Н 209" самолетăн екипажне шырама кайать. Вăл карапсенчен пĕрине епĕ йертсе пыратăп.

Пирĕн отрйадăн самолечĕсем Совет Союзĕн Геройĕн Шевелĕв йулташăн експедицинчи Совет Союзĕн Геройĕ Водопйанăв йулташăн отрйадĕнчи самолетсем пекех. Анчах пирĕн карапсем çинче çĕнĕрех хатĕрсем пур, вĕсене çĕрле вĕçмелле тата анса лармала тунă. Пĕтĕм самолетсен çуначĕсем айне йатарласа тунă фарăсем лартнă, фӳзеляжăн хӳри пайĕнче—кашни машина çине прожектăр лартнă. Ку прожектăр поларти тинĕссей çийĕнче вĕçнĕ чухне вĕçсе пыракан самолет хыçĕнчен пăра çутатать. Çапла майпа епĕр çĕрле анса лармали вырăнсем шыраса тупма шутлатпăр.

Пирĕн умра питĕ йăвăр ĕç тăрать. Çурçĕр тинĕс çулĕн Тĕп управленийĕн поларта вĕçекен авиацийĕ поларла каçра, тата пирĕн „АНТ-6" пек йăвăр карапсемпе пĕрремĕш хут ĕçлет. Пирĕн Арктикăра çĕр çинче ĕçлемелле вăйлă мар хатĕрсемпе тунипех килĕшсе ĕçлеме тивет. Поларти пăрсем çинче лармали вырăнсене çутатса пăхма пирĕн вăйлă прожектăрсем пулаççĕ. Пирĕн самолетсем пăр çине ларма пултарччăр тесен, епĕр машина çине лартнă хатĕрсем çине çеç шанма пултаратпăр.

Анса ларассине, чи малтан самолета çĕр çине антарассине, пирĕн лотă высотомерпа тумалла пулать. Ку хатĕр пире самолет хăш вăхăтра мĕнле çӳлĕшре тăнине пĕр метр йăнăшмасăр тĕрĕс кăтартса парать. Йĕнчен пирĕн пăр çине анса лармалла пулсан, самолетсен хӳринче лартнă прожектăрсемпе çутатса пăхса лармали вырăн тупса, епĕр лотă-высотомерсăр пуçне подфарниксемпе тата çутă паракан ракетăсемпе усă куратпăр.

Пирĕн çанталăк начар тĕнипе, кĕтмен çĕртен самолет пăрланнипе, йе мотор пăсăлнипе васкавлă анса лармала та пулма пултарать. Ун пек чухне епĕр, самолет çинчи мĕн пур çутатмали хатĕрсемпе, чи малтан—хамăрăн Арктика условийĕнче самолета тытса пырассин нумай çулхи опычĕпе усă куратпăр.

Леваневски йулташ самолечĕн екипажĕ чĕрĕ-ши? Леваневски йулташăн опытне шута илсе, самолет виçĕ моторпа вĕçнĕ вăхăтра пулнă мĕн пур начар условире вăл машина ваннипех пăр çине анса ларма пултарнă, тесе шутлатăп епĕ. Екипаж, ман шутпа, сывах йулмалла. „Н—209" самолетăн радиостанцийĕ калаçмани, самолета авари пулнă, тесе шутлама май парать. Екипаж хăй пĕтни çинчен сăмах та пулма пултараймасть.

Çурçĕр хайар тата чейе те ултавлă. Унта ĕтем нумай тĕрлĕ йăвăр, кĕтмен çĕртен тухакан инкексем тĕл пулать.

Ĕçре пиçсе çитнĕ, хăйĕн ĕçне, хăйĕн тăван çĕршывне йуратакан, хăйĕн Ленин—Сталин партине шанакан совет çынни Арктикăра вилмелле мар, вилме те пултараймасть, вăл поларти çанталăкпа кĕрешнĕ çĕртен çĕнтерсе тухать.

Епĕр хамăра панă заданине пурнăçа кĕртессине шансах тăратпăр. Епĕр Леваневски йулташ самолечĕн екипажне тупма пĕтĕм вăйа, пĕтĕм пĕлӳве хурăпăр.

„Н-211" самолет командирĕ
Совет Союзĕн Геройĕ.
М. С. Бабушкин.

Совет авиацин çĕнтерӳвĕ

„СССР В-6" дирижаблĕн рекордлă вĕçевĕ

Çентаберĕн 29-мĕшĕнче ирхине нисçта анса лармасăр инçе вĕçев тума тухса кайнă „СССР В-6" дирижабль октаберĕн 4-мĕшĕнче Мускава чиперех таврăннă. Дирижабль сывлăшра 130 сехет те 27 минут тытăнса тăнă, çав вăхăт хушшинче вăл 5.000 километра яхăн вĕçнĕ. Вĕçмелли аппаратсемпе нумай вăхăт хушши вĕçес тĕлĕшпе ку тариччен тунă мĕн пур рекордсене чылай кайа тăратса хăварнă.

„Норвегия" йатлă çав йышши дирижабльпе Амундсен—Ельсворт—Нобиль експедицийĕ сывлăшра 71 сехет тытăнса тăрса, çав вăхăт хушшинче 3.393 миля вĕçнĕ. Германин „ЛЦ-120" дирижаблĕ 1917 çулта сывлăшра 101 сехет тытăнса тăнă. Францин „Диксмюд" карапĕ 1923 çулта 118 сехет те 40 минут вĕçнĕ. „СССР В-6" дирижабль „Граф Цеппелин" йатлă Германи дирижаблĕ тунă вăрăм рейссене те кайа тăратса хăварнă, вăл „СССР В-6" карапран хăйĕн кубатури йенĕпе 5 хут пысăкрах. Германи дирижаблĕ 1935 çулта нисçта анса лармасăр 119 сехет хушши вĕçнĕ.

Октаберĕн 4-мĕшĕнче кăнтăрла иртсен 5 сехет тĕлнеле „СССР В-6" дирижабль çĕре анса ларма пуçланă. Аеродром çине пухăннă питĕ нумай халăх мухтавлă сывлăшвĕçевçисене хаваслăн саламланă.

Аеродром çинче митинг пулса иртнĕ.

Гражданла сывлăш флочĕн начальникĕ комкор Ткачов йулташ карап екипажне саламланă.

„СССР В-6" карап командирĕ Паньков йулташ ответлă сăмах тухса каланă.

— Епĕр хамăрăн тăван партипе правительствăна, хамăрăн юратнă çулпуçне Сталин йулташа—епĕр кирек мĕнле заданине те пурнăçа кĕртме хатĕр, тесе ĕнентеретпĕр. Пире нимĕнле йăвăрлăхсем те хăратмаççĕ,—тенĕ вăл.

(ТАСС).

Совет спорт авиацин çĕнĕ рекорчĕсем

Совет спорт авиацийĕ октаберĕн 2-мĕшĕнче çĕнĕ пахă çĕнтерӳ тунă. Çав кун А. С. Йакăвлĕв конструкципе тунă çăмал самолетсемпе икĕ чаплă вĕçев тунă. 100 километр тăршĕ маршрутпа вĕçнĕ.

Летчик-капитан П. Стефановски тата штурман-капитан П. Никитин иккĕн лармали „УТ-2" гидропланпа (вăл 140 лаша вăйлă моторпа ĕçлет) çав трассăна 28 минут та 33 секундăра вĕçсе тухнă. Летчик-испытатель Й. Пионтковски, 150 лаша вăйлă моторпа ĕçлекен пĕччен лармали „УТ-1" гидросамолетпа 100 километра 27 минут та 28 секундăра вĕçсе тухнă.

ССР Союзĕн А. В. Косарĕв йачĕпе тăракан Тĕп аероклубĕнчи спорт комиссийĕ „УТ-2" гитросамолетăн вăтам хăвăртлăхне сехетре 210 километр тата „УТ-1" гидросамолетăн вăтам хăвăртлăхне сехетре 218 километр тесе палăртнă. Çав вĕçевсен результачĕсене çăмăл гидросамолетсен пĕрремĕшпе иккĕмĕш категорисемпе хăвăрт вĕçес тĕлĕшпе 100 километрлă участка çинче тунă Пĕтĕм Союзри (нацилĕ) рекордсем тесе йышăннă. Спорт комиссийĕ вăл рекордсене пĕтĕм тĕнчери рекордсем вырăнне шутлама тивĕçлĕ материалсене пĕтĕм тĕнчери авиаци федерацин (ФАИ) президиумне тăратма йышăннă.

(ТАСС).

Совет Союзĕ тăрăх

★ Октаберĕн 1-мĕшĕнче ПСК(б) Партин Краснодар крайкомĕпе хула комитечĕн тата Крайĕçтăвкомĕн „Большевик" хаçачĕн пĕрремĕш номĕрĕ тухнă.

★ Октаберĕн 2-мĕшĕнче Мускавра Каляйĕв йачĕпе тăракан клубра Осоавиахимăн Мускав хулинчи пĕрремĕш конференцийĕ уçăлнă. Конференцине 400 делегат тата нумай хăнасем — столицăн Осоавиахим активĕ пухăннă.

★ Çентаберĕн 1-мĕшĕнчен Башкирин 18 районĕнче халăх творчествин радиофестивалĕсем пуçланнă. Çĕршер рабочисем, работницăсем, колхозниксем, колхозницăсем тата килхуçи хĕрарăмĕсем фестивальре хутшăнаççĕ. Октаберĕн 5-мĕшĕнче республикăри радиофестиваль пуçланать.

Гектартан 16 центнер йĕтĕн сӳсĕ

КИЙЕВ, октаберĕн 4-мĕш. (ТАСС). Володар-Волынск районĕнчи „Çамраксен Пĕтĕм тĕнчери 17-мĕш кунĕ" йачĕпе тăракан колхозри Ромйанюк звени, Пĕтĕм Союзри йалхуçалăх выставкинче пулма тивĕç илесс... тухăçлă йĕтĕн туса илнĕ. Вăл кашни гектар çинчен 16 центнер йĕтĕн сӳсĕ илнĕ.

„Тринадцатый октябрь" колхозри Тарадайник звени 4 гектарлă участка çинчен кашни гектартан 17 ...

Мускав—Атăл каналĕ çинче Ленинпа Сталинăн питĕ те пысăк монументĕсене туса лартнă. Монументсен автăрĕ — С. Меркурăв скульптор.

ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Сталин монуменчĕ.

Ф. Кислов фото-ӳкерчĕкĕ (Союзфото).

Чукун çул строительствинчи стахановла вунăкунлăх

Тăваттăмĕш кун

Чукун çул строительствинчи стахановла вунăкунлăх пуçланни 4 кун иртрĕ ĕнтĕ. Çак вунăкунлăхра кашни строительĕн чăн-чăн большевикла ĕçлесе чи малти вырăна йышăнассишĕн, кулленхи ĕç нормине тултарса пырса чукун çула хăвăрт туса пĕтерессишĕн, Октябрь уйавĕ тĕлне Шупашкара пĕрремĕш пуйăс килмелле тăвассишĕн пĕтĕм вăйа хурса кĕрешмелле.

Çак пысăк задачăна пурнăçлас майпа пыракан стахановла вунăкунлăхăн тăваттă кун хушшинчи ĕçĕсем лайăх тĕслĕхсем кăтартса параççĕ. Ĕçтухăçне ӳстерес йенĕпе калама çук паха тĕслĕхсем пур. Анчах вырăнтан тапранман участкăсем те çук мар. Малтан прорывра пулнă участкăсем халĕ те прорыврах. Ку строительствăри начальниксемпе участкăсенче йертсе пыракансем вунăкунлăхăн малтанхи кунĕнче палăрнă ситменлĕхсене шута илсе вăхăтра тӳрлетме шутламаннинчен те килет.

Вăл ситменлĕхсем стахановла вунăкунлăхăн тăваттăмĕш кунне ситиччен пынă пулсан, вунăкунлăх пĕтиччен те тăсăлма пултараççĕ. Мĕншĕн тесен пуçлăхсем канцелярисенче сăмах çапса ларсах вăхăта ирттереççĕ. Çĕнĕ начальник И. П. Куценкă йулташ ĕçе пуçăнни икĕ эрне ситет ĕнтĕ, анчах пĕр хутчен те участкăсенче пулман. Вăхăтлăха снабжени начальникĕ пулса ĕçленĕ Филиппăв та пĕр уйăх хушшинче 2 хут кăна участкăра пулнă. Стахановла вунăкунлăх пуçланиччен ăçта, кама мĕн кирлине, мĕн пуррипе çуккине шута илсе тухман.

Çавăнпа 3-мĕш участкăра çĕрле ĕçлекен сменăсем хунар çуккипе кăвай çуттинче ĕçлеççĕ. Çутă çук пиркийĕх нумай рабочисем ĕçе пăрахса кайнă. Хунарсем Канашра 3 кун нимĕн усăсăрах выртнă. Çавăн пекех вунăкунлăх вăхăтĕнче сунтармали йапаласем пĕтнĕ пирки темиçе тракатăр, екскаватăр, самосвал нимĕн ĕçлемесĕр ларнă. Снабжени йенĕпе вунăкунлăха сителĕклипе хатĕрленмен.

1-мĕш участкăна 3-мĕш участкăран 20 тракторлă скреперсем илсе килме 3 кун кирлĕ пулчĕ. Çак виçĕ кун хушшинче скреперсен хăйсен планне пурнăçламалла пулнă пулсан—прораб Лабун „Октаберĕн 4-мĕшĕнче ирех ĕçе тытăнатпăр" тесе лăплантарнипе пайанхи куна ситсе те ĕçе тытăнайман-ха.

Çапла ӳрĕк-сӳрĕк ĕçлесе пыни, канцелярисенче пуш сăмаха ытларах çапса ларни, участкăри начальниксем массăпа сыхăнса ĕçлеменни строительствă ĕçĕнчи ситменлĕхсенчен пĕри пулать.

Ĕçе организацилеме пĕлни кирлĕ

Çĕрпӳ районĕнчи „Хĕрлĕ Павари" колхозĕнчен октаберĕн 4-мĕшĕнче колхоз председателĕ Семенов йулташ хăйĕн колхозĕнчи колхозниксене организацилесе 12 лашапа 40 çынна илсе пычĕ. Вăл ĕçе тытăниччен колхозниксемпе лини çинче канашлу туса иртерчĕ, тепĕр кунех ирех ĕçе тытăнчĕç. Пĕрлешӳлĕ апатланма аш-какай илсе килнĕ. Вĕсем чукунçул строительстви пĕтиччен ĕçлеме обязательствă илчĕç.

4-мĕш участкăри плотниксен бригадинче мĕн пурĕ 267 çын ĕçлеççĕ. Вĕсен ĕçĕн тухăçлăхĕ кунран кунах ӳссе пырать. Алексейев плотникăн бригади кулленхи ĕç нормине 185 процент тултарса пырать. Кунта бригадăна 4 звенона уйăрнă. Алексейĕв йертсе пыракан звено 3-мĕш кунра ĕç нормине 220 процент тултарнăччĕ. Халĕ—285 процент тултарса пырать. Çавнашкалах 6-мĕш участкăри Васильĕв плотникăн бригади те кашни кунах çĕнĕрен çĕнĕ ӳсĕмсем туса пырать. Çак участкăрах кăмака тăвакан Д. Трубин ĕç нормине 171,7 процент тултарать. Çакăнтах кăмака тунă çĕрте ĕçлекен Мешков кулленхи нормăна 41,5 процент çеç тултарса пырать.

7-мĕш участкă строительствăна кайала туртать, кулленхи ĕç нормине 13 процент çеç тултарать. Унăн начальникĕ Ромински йулташ ĕç вăйне йĕркелĕ тăратса тухман. Ĕçлекенсем хушшинче социализмла ăмăртăва пуçарса йаман.

Тимлесех ĕçлени çук-ха

Йулашки вăхăтра чукун çул строительствине ĕçлеме пыракансен шучĕ кунтан кун ӳсме тытăнчĕ. Ку ĕнтĕ строительствăри руководителĕсенчен тата организацисенчен лайăхрах, тимлĕрех ĕçлеме ыйтать. Виççĕмĕш участкăри работниксем çакна ăнланса илмеççĕ. Прораб Дашков ĕçе тĕрĕс йĕркелессишĕн тăрăшмасть. Маçтăрсем те, хăйсен ĕçне ӳрĕккĕн-сӳрĕккĕн çеç пурнăçа кĕртсе пыраççĕ. Акă Шелтемрен пынă колхозниксене ĕçе мĕнле вырнаçтарнине илер. Вĕсене, 30 çынна пĕр пĕчĕк, 10 çын ĕçлемели вырăна тăратнă. Паллах, пĕр çĕрте ... Ĕçленĕшĕн укçа тӳлес ĕçе те кирлĕ пек йĕркелемен. Кассир ĕçре юрийех мĕшĕлтетсе ĕçлет. Кун çинчен Дашкова темиçе хут та пĕлтернĕ. Анчах вăл „мана çавăн пек кассир кирлĕ те", тенисĕр пуçне, урăх ним те тумасть. Тепĕр чухне вара колхозниксене юрăхсăр сăмахсемпе ятлама тытăнать.

Ĕçлекенсем хушшинче культурăлла-массăлла ĕçе тивĕçлипе йĕркелемен. Нумай пулмасть комсомол Канаш райкомĕ культбригада организацилесе янăччĕ. Ку бригада участкăна пырса, çавăрăнса тухса кайрĕ те нимĕн те тумарĕ. Колхозниксем

Плансем салатнӑ,—ӗҫе тытӑнман

ҪӖМӖРЛЕ (хамӑр корр.). Колхозсенче строительствӑ ӗҫӗ ҫав тери начар пырать. Колхоз председателӗсем йаланах „ӗлкӗрӗпӗр“ тесе ӗҫе уйӑхран уйӑха чӑсса пыраҫҫӗ. Хӑшӗсем тата ҫӗнӗрен тумали строительствӑ пирки „пирӗн материалсем ҫук, килес ҫула хӑвармала пулать“, теҫҫӗ.

Мыслецри „Ударник“ колхозӑн 70 лаша, 20 ӗне вырӑни ӑшӑ вите, пӗрер омшаник, навус тӑкмали вырӑн тата изоьатӑр тумала. Колхоз председателӗ Йермишин ҫуркуннех ӗнесем хупмали вите тума договӑрне ҫирӗплетнӗ. Анчах пайанхи куна та ӗҫе тытӑнман. Райҫӗрӗҫ пайӗнчен илнӗ 500 тенкӗ укҫана ахалех салатса йанӑ, стройматериалсене сутнӑ. Ҫавӑнпа халӗ нимӗн те ҫук.

Савадеркинти „Авангард“ колхозӗн 25 пуҫ ӗне вырнаҫмалӑх ӑшӑ вите, изольатӑр тумала. Ку тарана ҫитнӗ ҫӗре нимӗн те тума тытӑнман. Тырӑ типӗтмели авӑна та ҫӑвӗнех тӑвахтӑр тесе пурӑнчӗҫ. Колхоз председателӗ Арсентйӗв ӗҫе сӑмахпа ҫеҫ туса пырать.

Кадеркинти „Молния“, Вырӑс Улхашӗнчи „Лесной огонек“ т. ыт. колхозсем кӑҫал тума палӑртнӑ строительствӑсене пӗхӗшне те тума тытӑнман. „Молния“ колхозра иртнӗ ҫулта сысна вити пулман пирки сысна ҫурисем чылай вилкеленӗ.

Строительствӑ ӗҫӗ начар пыни райҫӗрӗҫ пайӗнчен нумай килет. Вӑл колхозсене план салатса панисӗр пуҫне урӑх нимӗн те туман. Райҫӗрӗҫ пайӗнчи строительствӑ ӗҫӗпе ӗҫлекен Сафонӑв йулташ колхозсене тухмасть, ҫавӑнпа та хӑш колхозра ӗҫ мӗнле пынине те пӗлмест.

Хар. Лисин.

Метрострой мастерскойӗ 2-мӗш черетри метрон „Революци плошчачӗ“ станцин макетне хатӗрленӗ. Станци пройектне Душкин архитектӑр хатӗрленӗ, скульптурӑ тӗлӗшӗнчен станцине искусствӑсен тава тивӗҫлӗ деятелӗ Йа. Манизер вӗркеленӗ. Пройекта Йывӑр промышленнӑҫ халӑх комиссариатне ҫирӗплетме тӑратнӑ.

ӲКЕРЧӖК ҪИНЧЕ: „Партизан“—Метро „Революци плошчачӗ“ станцин скульптурисенчен пӗри.

Л. Великжанин фото-ӳкерчӗкӗ (Союзфото)

Хатӗрлев планӗсене пурнӑҫламала

ПАТӐРЙЕЛ. Патшалӑх умӗнчи парӑмсене вӑхӑтра парса пырасси, вӑл—кашни йал совечӗсемпе колхозсен тата колхозниксемпе уйрӑм хуҫалӑхсен чи хисеплӗ обйазаннӑҫӗ пулса тӑрать.

Анчах та хӑшпӗр колхозсемпе уйрӑм хуҫалӑхсем тата йалсовечӗсемпе колхозсен правленийӗсем хатӗрлев планӗсене вӑхӑтра пурнӑҫласа пырассине чылайӑшӗ хакламаҫҫӗ.

Патшалӑх умӗнчи хатӗрлев планӗсенчен кантӑр вӑрри парассине илсен, пайанхи куна районӗпе 39,3 процент ҫеҫ пурнӑҫланӑ.

Ку ӗҫре уйрӑмӑнах „Сормово“, „Ҫӗнӗ хунав“, „Ырлӑх“ колхозсем йулса пыраҫҫӗ, вӑл колхозсем пайанхи куна пӗр килограм та кантӑр вӑрри патшалӑха паман. Ҫакӑнпа пӗрлех сӳс-кантӑр парассипе „Октабӗр йалавӗ“, „Ырлӑх“, „РОКК“ т. ытти колхозсем плана пӗр процент та пурнӑҫламан.

Ҫакӑнта асӑннӑ колхозсемсӗр пуҫне патшалӑха кантӑр вӑрри парассипе „Ленин ҫулӗпе“, „Ҫӑлтӑр“, „Ленинское знамя“, сӳс-кантӑр парассипе „Ҫӑлтӑр“ колхозсем плана 100 процентпӗх пурнӑҫларӗҫ.

Н. Квасӑв.

ВАСКАМАҪҪӖ

Пӗччен Хырти „Правда“ колхоз (Сӗнтӗрвӑрри р.) ку тарана ҫитсе те авӑн ҫапса пӗтермен-ха. Ыраш 1500 урапа, ҫуртри 300 урапа ҫапман.

Итем ҫинче ним йӗрке ҫук. Арпасем ӑҫта кирлӗ унта йапӑхса выртаҫҫӗ. Ҫапнӑ улӑмсене типтерлемен, вӗсем те ҫӑмӑр айӗнчех выртаҫҫӗ. Колхоз председателӗ Румйанцӗвпа бригадирӗсем пахалӑхлӑ ӗҫлессишӗн тӑрӑшмаҫҫӗ.

Авӑн ҫапмали машинӑ таса мар, парапанӗн шӗлӗсем пылчӑкланса хытсах ларнӑ. Тырӑ сӑвӑрмали машинӑсене витнӗ итем ҫине кӳртмен, вӗсем ҫӑмӑр айӗнчех ларaҫҫӗ.

Кӗрхи ҫӗртмене тата кӗрхи акана тахҫанах пӗтернӗ пулсан та, ҫейӑлкисем усӑ вырӑнтах ларaҫҫӗ.

Колхоз анкартинче туса пӗтермен вите пур. Ана 49 лаша вырӑни тумала пулнӑ. Анчах ку тарана ҫитсе ӗҫе тытӑнман. Паллах, малалахи ҫӑмӑрлӑ сивӗ кунсем выльӑхсене усӑ кӳмеҫҫӗ. Вите патӗнчех икӗ купа улӑмсем ҫӗрсе выртаҫҫӗ.

Колхоз анкартинчи улӑмсем патӗнче выльӑхсем чавкаланса ҫӳреҫҫӗ.

Колхозниксен пухӑвӗсене сайра хутран ҫеҫ тӑваҫҫӗ. Суйлав саккунне колхозниксене вӗрентме тытӑнман.

Ник. Орлов.

Пуҫламӗш тата вӑтам шкулсенче ӗҫлекенсен сойузӗн районри конференцийӗ

ҪӖМӖРЛЕ (хамӑр корр.). Ҫӗнтабӗрӗн 26—29-мӗшӗнче пуҫламӗшпе вӑтам шкулсенче ӗҫлекенсен сойузӗн членӗсен районри конференцийӗ пулса иртрӗ. Конференцинче профсойуз райкомӗн ӗҫӗсем ҫинчен, Сарин отчот туса пачӗ. Анчах унӑн докладӗнче пушӑ сӑмахсемсӗр пуҫне нимӗх те курма пулмарӗ, халӑх тӑшманӗсен ӗҫӗсем ҫинчен, профсойуз комитечӗ вӗсемпе мӗнле кӗрешсе пыни ҫинчен докладчик питех те сахал чарӑнса тӑчӗ.

Конференцин иккӗмӗш кун йӗркипе ревкомиҫҫи отчотне итлемеленчӗ. Анчах ревкомиҫҫи председателӗ Димитрийӗвӑн ирсӗр, тӑшманла ӗҫӗсене палӑртса, отчот туса пӗтеричченех ӑна конференцинчен кӑларса йачӗҫ. Димитрийӗв нумай ҫул хушши Ҫӗмӗрлери 1-ш номӗрлӗ шкулта вырӑс чӗлхипе „вӗрентсе“ пурӑннӑ. Вӑл ӗлӗк офицер пулнӑ, Кӑрмӑш восстанинче пулса, Совет влаҫне хирӗҫ кӗрешнӗ.

Ҫавӑн пекех конференци пысӑк Улхашри пуҫламӗш шкулта вӗрентекене—Гнутӑвӑна Фриц Бурмагин шпионпа ҫыхӑну тытнине пытарса пурӑннӑшӑн конференцирен кӑларса йачӗҫ.

Профсойуз комитечӗпе райҫутӗҫ пайӗ педагогикӑ ӗҫӗнчи халӑх тӑшманӗсене тупса, вӗсене тӗппипех пӗтерессишӗн питех те сахал ӗҫленӗ. Вӗсем тӑшмансен ирсӗр ӗҫӗсене курайман. Шкулсенче дисциплинӑна йапӑхлатса йанӑ. Кирӑв йачӗпе тӑракан шкулта Султайӗв учитӗл вӗренекенсене троцкисла установкӑсем панӑ. Ҫав шкултах Вишневскайа учительницӑ Совет шкулӗ ҫинчен елеклӗ сӑмахсем сарнӑ.

Хутарти вӑтам шкулта Павлӑв троцкис, хулари шкулсенче Володин, Нефетйӗв, Каплин т. ыт. халӑх тӑшманӗсем ӗҫленӗ. Анчах вӗсен ирсӗр ӗҫӗсене вӗсемпе пӗрле пурӑнакансем пытарса пурӑннӑ, халӑх тӑшманӗсемпе ҫыхланса кайса вӗсен чӑн-чӑн тусӗсем пулса тӑнӑ. Хутарта Павлӑв троцкиспа Таньков, Сырцов (коммунис) пӗрлешсе кайнӑ. Павлӑва тытса кайсан та Таньков унпа ҫыхӑну тытнӑ, унӑн йапалисене хӑй патӗнче усранӑ. Сырцов те вӗсемпе пӗрле ӗҫлесе пынӑ, политкружок ӗҫне йапӑхлатса йанӑ.

Кӗҫӗн вӑтам шкулта вӗрентекенсем Кудрйашовпа унӑн арӑмӗ, Ульеторкинӑсем халӑх тӑшманӗсемпе ҫыхӑну тытса пурӑннӑ. Халӗ ӗнтӗ вӗсене шкулсенчен кӑларнӑ. Анчах тӑшмансен тусӗсем хӑйсен ирсӗр ӗҫӗсене малалах тӑсаҫҫӗ. Кудрйашовсем халӗ вӗренекенсене хӑйсен хватерне пухса „йурӑсем йурлаттараҫҫӗ“, Ульеторкинсем те ҫавӑн пекех ачасене пухса, хальхи учителсем ҫинчен елеклеҫҫӗ.

Районти учительсен профсойуз комитечӗ ку таранччен ҫак тӑшмансене, вӗсен йулашкийӗсене пӗтерессипе питех те начар ӗҫленӗ. Вӑл хӑй (Сарин) тӑшмансемпе хурӑшса кайнӑ. Канмали ҫуртсене, курортсене Ульеторкинсене укҫасӑрах йанӑ. Учительсен политпӗлӗвӗсене хӑпартас, вӗсемпе куллен ӗҫлесе пырас тӗлӗшпе питех те сахал ӗҫленӗ. Ҫавӑнпа та конференци комитет ӗҫне ҫителӗксӗр тесе йышӑнчӗ. Ҫӗнӗ состава ӗҫлеме пултаракан учительсене суйларӗ.

Вӗренӳ отличникӗ

Ӑна Патрик Иливанӑв тесе чӗнеҫҫӗ. Ун ҫинчен пӗлес килсен, Йелчӗкри (Куславкка р.) вӑтам шкулти вӗренекенсенчен ыйтӑр.

— Кам вӑл П. Иливанӑв?—тесен, пуринчен те пӗр ответ илетӗн:

— Отличник.

Патрик кӑҫалхи вӗренӳ ҫулӗнче 10-мӗш класра вӗренет. Иртнӗ вӗренӳ ҫулӗнчи зачотра пур предметсемпе те „отличнӑ“ илсе, вӑл 9-мӗш класран 10-мӗшне „Мухтав грамӑтипе“ куҫрӗ.

Вӗренӳ ҫулӗ пуҫлансанах Константин Иванович преподавателӗ Патрикрен химипе ыйтрӗ. Патрик „отличнӑ“ ответлерӗ. Кӑҫалхи вӗренӳ ҫулне ҫавӑн пек отметкӑпа пӗтерме сӑмах парать Патрик.

Аслӑ Октабӗр уйавӗ ҫывхарать. Вӗренекенсем ку чаплӑ уйава пысӑк парнепе—отличнӑ вӗреннипе кӗтсе илме шкулта социалисӑмла ӑмӑрту пуҫарса йачӗҫ. Патрик чи малтанах ӑмӑртӑва хутшӑнчӗ.

П. Иливанӑв—примерлӑ вӗренекен ҫеҫ мар, вӑл—примерлӑ комсомолӗҫ та. Ӑна кӑҫал комсомолӗҫсем вӑрттӑн сасӑпа комсомолӑн шкулти комитечӗн членне суйларӗҫ.

Патрик комсомол ӗҫӗнче те вӗренӳри пекех тӑрӑшса ӗҫлет. Ӗҫри ҫитӗнӳсемшӗн, тӑрӑшса вӗреннӗшӗн ӑна шкул дирекцийӗ темиҫе хутчен те премиленӗ.

Вӑл „Чӑваш Коммунӗ“, „Красная Чувашия“, „Ленин йалавӗпе“ „Колхозные ребята“ тата „Роман газета“ хаҫат-журналсене ҫырӑнса илсе, вӗсене йӗркелӗн вуласа пырать.

— Манӑн атте—колхоз председателӗ, анне—учительницӑ, а епӗ литератӑр йе инженер пуласшӑн. Манӑн ӗмӗт пурнӑҫланатех, мӗншӗн тесен, епӗ телейлӗ сталинла ӗмӗрте пурӑнатӑп,—тет вӗренӳ отличникӗ П. Иливанӑв.

Н. Мишин.

Радиофестивалӗн вуҫҫӗмӗш кунӗ

Тӑвай районӗ хатӗрленмен

Программӑ тӑрӑх, фестивалӗн виҫҫӗмӗш кунӗ Тӑвай районӗнчи художествӑлӑ пултарулӑх выступленийӗпе пуҫланмалаччӗ. Анчах районри фестиваль комиҫҫийӗ (председателӗ Петров) пултарулӑх коллективӗсене выступленине хатӗрлемен. Репродуктӑра малтанах начар йурланӑ сасӑсем чӗгретсе илчӗҫ, ҫитменнине йурри те фестивальре пуҫласа йурламали йура мар. Ҫавӑнпа Жӳри Тӑвай районӗн выступленине ҫийӗнчех чарса лартрӗ.

Микрофон умӗнче—Шупашкар хулин художествӑлӑ пултарулӑхӗ. Уйрӑм выступленисем начар мар пулчӗҫ. Строительсен клубӗ ҫумӗнчи Альошӗв йертсе пыракан хор ҫичӗ йурӑран пиллӗкӗшне аван йурларӗ, йулашки икӗ йурра—„Партизанская“ тата „Песня о родине“ йурӑсене начар йурлани хорӑн пахалӑхне чакарчӗ. Пӗччен йурлакансенчен уйрӑмӑнах ҫӗвӗ ҫӗлекенсен ертелӗнче ӗҫлекен Бельакова йулташ йурланине палӑртмала. Бельаковӑн сасси те пур, маҫтӑрлӑхӗ те ҫителӗклӗ. Ҫавӑнпа хулари радиоитлекенсем ыйтнипе „Страдание“ йурра икӗ хут йурласа пачӗ. Хӑйӗн маҫтӑрлӑхне хӑпартас тӗлӗшпе малашне тӑрӑшса ӗҫлесен, Бельаковӑран начар мар йура ӑсти пулма пултарать.

Хут купӑспа выльас тӗлӗшпе Шупашкарти пушар дружининче ӗҫлекен Шкода йулташ хӑйӗн пултарулӑхне лайӑх кӑтартрӗ. Вӑл пӗччен йурлакан Бельаковӑна хут купӑспа хавхалантарса пынӑ чухне те, пӗччен выльанӑ чух та, кӗвве питӗ килӗшӳлӗ те аван кӑларчӗ. Пӗччен йурлакансенчен тепӗр исполнитӗл—2-мӗш №-лӗ Универмагра ӗҫлекен Андрейӗвӑ Татйана тухса йурларӗ. Ройальпе йе купӑспа хавхалантарса пыракан пулнӑ пулсан, Андрейӗвӑ йурлани, паллах, авантарах тухнӑ пулӗччӗ. Унӑн сасси усӑ, анчах хӑшпӗр ҫӗрте йурӑ ҫавӑрнӑҫне тӗрӗс тӑваймани унӑн выступленин пахалӑхне чакарать. Йулашкинчен радиоузӗлра ӗҫлекенсем Бердникӑв (мандолинӑпа), Жукӑв (гитарӑпа) й-шсем аван хак илме тивӗҫлӗ. Кунта ҫакна калас пулать: хулара художествӑлӑ пултарулӑх иртнӗ ҫулхинчен чылай малала кайнӑ, анчах ҫӗнӗ йурӑсене ҫителӗксӗр вӗреннӗ, профессионаллӑ искусствӑ йенӗпе ӗҫлекенсем рабочисемпе служӑшчисем тата вӗренекенсем хушшинче тӑтӑшрах пулни кирлӗ, вӗсене хӑйсен пултарулӑхне вӑйлатма пулӑшу парас пулать. Радиокомитетӑн хулари художествӑлӑ пултарулӑха микрофон умӗнче час-часрах кӑтартмала.

Шупашкар хыҫҫӑн Куславкка районӗ тухрӗ. Выступлени ӑнӑҫлӑн иртрӗ. Программӑра художествӑлӑ пултарулӑхӑн тӗрлӗ йенӗсене кӗртнӗ. Хорсем те, уйрӑм исполнителсем те аван йурларӗҫ. Куславкка выступленинче виҫӗ национальнӑҫсен (чӑвашсен, тутарсен тата вырӑссен) пултарулӑхне итлерӗмӗр. Вӗсене суйласа илме пӗлнӗшӗн фестиваль комиҫҫине мухтамала. Кунта пуринчен ытла колхозник Майоров ҫемйи (4 ывӑл) хӑй пӗр ансамбль пулса „Песня о родине“, „Мазурка“, „Полька“ выльаса пани кӑмӑла кайрӗ. Чашламари 5-мӗш класра вӗренекен ача Моисейӗв „Михаьа“ йатлӑ сӑвва ытла та килӗшӳлӗ такмакласа пачӗ. Моисейӗва сӑмах ӑсталӑхне вӗрентсен, унран пултарулӑ артис тухасси паллах. Ҫакна искусствӑри специалиссен шута илмеле.

Йулашкинчен фестивальре тухма Тӑвай районӗ те пӗр хут сӑмах илчӗ. Анчах иккӗмӗш хут тухса та ӑнӑҫлӑ выступленисем параймарӗ. Турикас Тушкел хорӗпе Ҫӗнӗ Пуйанкасси хорӗсӗр пуҫне ыттисем пурте микрофон умне тӑратма йурӑхсӑр. Шавлӑ оркестӑр, чӑнах та, шавсӑр пуҫне нимех те параймарӗ. Дмитрийӗв скрипкӑпа начар выльарӗ. Пӗртен пӗр Турикас Тушкелӗнчи ҫамрӑксен хорӗ ҫеҫ кӑмӑла каймала йурларӗ. Йуррӑн сӑввисене ҫамрӑксем хӑйсем ҫырнӑ, йурӑ кӗввисем те—хӑйсен йенчи,—ҫакӑ хорӑн выступленине интереслӗх кӳрет. Анчах Тушкелри хорӑн, хӑйсем шухӑшланӑ йурӑсем ҫинче кӑна чарӑнса тӑмала мар, ҫӗнӗ йурӑсене нотӑсем тӑрӑх йурлама вӗренес пулать. Кун пек хорсем Тӑвай районӗнче татах та пур. Тӑвай районӗн выступленийӗ начар пулнишӗн пӗтӗмӗшпех районри фестиваль комиҫҫийӗ тата ӑнсӑртран унӑн председателӗ пулнӑ Петров (РОНО пуҫлӑхӗ) айӑплӑ. Районри организацисем фестивальне хатӗрленсе килменшӗн Петрова ответ тытарма тивӗҫлӗ.

Йакку Араслан.

Ҫулталӑк планне ытлашшипех тултарнӑ

Йӗпреҫ вӑрманпромхоз ҫумӗнчи сухӑр йухтаракан пунктӑн планпа 110 тоннӑ сухӑр йухтарса хатӗрлемеле пулнӑ пулсан, вӑл 18,3 тоннӑ планран ирттерсе тултарнӑ. Кунсӑр пуҫне, Октабӗр уйавне хатӗрленнӗ май сезон пӗтиччен тата 7 тонна сухӑр йухтарма обйазательствӑ илнӗ. Сухӑр йухтарса пуҫхассипе пурӗ 7 участка ӗҫлет. Вӗсем пӗр-пӗринпе социалисӑмла ӑмӑртӑва хутшӑннӑ. Ҫӗнӗ Выҫлири участкан маҫтӑрӗ ӗҫе лайӑх организациленипе октабӗрӗн пӗрремӗшне 30 тонна пухса ҫулталӑкри плана ытлашшипех тултарнӑ. Ҫавнашкалах Купньари участкӑра та плантан 6 тонна ирттернӗ.

Сухӑр йухтарса пухас ӗҫре Хурамал йалӗнчи Ларионӑв тӑрӑшса ӗҫлет. Унӑн планпа 2086 килограм сухӑр пухмала, вӑл 5 пин килограм ытларах пухнӑ. Ҫапла вара Ларионӑв кулленхи ӗҫ нормине 209 процент таран тултарса пынӑ. Унӑн ӗҫукҫи те ӳссех пырать. Кунта социалисӑмла ӑмӑртӑва хутшӑнса стахановла йухӑма анлӑн сарса йанипе кулленхи ӗҫ нормине Александров А.—205, А. Йефремов—202, А. Данилӑв—199 процент тултарса пыраҫҫӗ.

Халӗ Октабӗр уйавне хатӗрленнӗ май, ҫак палла стахановцасем кулленхи ӗҫ нормине 250 процентран кайа мар тултарса пыма обйазательствӑ илчӗҫ.

И. Алексейӗв.

Вулав ҫурчӗсене питӗрнӗ

Ҫӗмӗрле районӗнчи йалсенче хӑшпӗр вулав ҫурчӗсем халӗ те пысӑк ҫӑрасемпех питӗрӗнсе тӑраҫҫӗ.

Акӑ, Тукас йалсоветӗнче иртнӗ хӗлле вулав ҫурчӗ усаҫи турӗҫ. Вулав ҫурчӗн пуҫлӑхне Сымулов Михаила лартрӗҫ. Анчах та Сымулов вулав ҫуртне хӗл каҫипех хупӑ тӑратрӗ. Йулашкинчен вара, хӑйӗн ӗҫне никама та памасӑрах, Ҫӗмӗрлене „Труженик“ савӑта ӗҫлеме тухса кайрӗ. Вулав ҫурчӗ хальхи вӑхӑтра мӑн ҫӑрапах питӗрӗнсе тӑрать. Йалта нимӗнле культурӑлӑ-массӑлӑ ӗҫ те ҫук. Колхозниксем хаҫат-журнал тупса вулаймаҫҫӗ. Хӑшпӗр ҫамрӑксем, кану вӑхӑтне культурӑлӑ ирттерес вырӑнне, урам тӑрӑх кировсӗр йурӑсем йурласа ҫӳреҫҫӗ.

Йалта комсомол организацийӗ пур. Анчах вӑл та ҫамрӑксене хӑй тавра йавӑҫтарассипе нимӗн те тумасть. Ҫамрӑксем суйлав Положенине вӗренме тытӑнман.

Ҫавӑн пекех Турхан, Пуйантайкинӑ, Кадеркинӑ йалӗсенче те вулав ҫурчӗсен ӗҫне йӗркелемен.

Саватер йалсоветӗнчи вулав ҫурчӗ, пӗлтӗрхи ҫул, усӑсӑрнах ӗҫлекелерӗ, анчах кайрантарах унӑн хӗрӳлӗхӗ сӳрӗлчӗ. Вулав ҫуртӗнче ӗҫлекен А. Кириллӑв хӑй ӗҫӗ ҫине ҫийелтен пӑхать, Ҫутӗҫ пайӗнчен те ӑна хускатакансем ҫук.

Вулав ҫуртне кӑҫал тӗпренех йусамалаччӗ, тӑррине витмелеччӗ. Халӗ ҫӑмӑр ҫунӑ вӑхӑтсенче пӳрте шыв анса тулать.

Кунти библиотекӑн пурлӑхӗ мӗн пурӗ те ҫӗр кӗнеке ҫеҫ. Колхозниксем вулав ҫуртне пырсассӑн та, хӑйсене кирлӗ кӗнеке тупаймасӑрах кайаҫҫӗ. Кӗнекесем илме уйӑрнӑ укҫапа кунта пачах усӑ курман.

Хутӑр подрайонӗнчи библиотекӑна пӗлтӗр усрӗҫ. Ун ҫинчен нумай шавларӗҫ. Анчах библиотекӑн кӗнеке фончӗ кун пек шавланипе нимӗн чухлӗ те ӳсмерӗ. Кӑҫалхи ҫул кунта пин те пилӗксӗр тенкӗлӗх кӗнеке илмеле пулнӑ пулсан, халиччен пӗр пуслӑх та илмен.

Патшалӑх пире пулӑшать. Вулав ҫурчӗсемпе библиотекӑсене тытса тӑма, кӗнекесем илме укҫа ҫителӗклӗх парать. Анчах та вӑл укҫасемпе вырӑнсенче йӗркелӗ усӑ курмаҫҫӗ, урӑх ҫӗрele салатса йараҫҫӗ. Кунта чи малтан районри ҫутӗҫ пайӗ айӑплӑ. Ҫутӗҫ пайӗ, шкулсене те начар йертсе пыракансӗр, клубсемпе, вулав ҫурчӗсемпе, библиотекӑсемпе пачах ӗҫлемест.

Мозйаков.

Дружинӑри чунсӑр ҫынсем

ШӐХАСАН. Ҫӗнтабӗрӗн 27-мӗшӗнче Шӑхасанта пушар тухрӗ. Ҫӗрле. Халӑх хӗрсе ҫывӑрать. Ҫулӑм часах икӗ кил хуралтисем тавра йавӑнма пуҫларӗ. Анчах насус та, шыв та ҫук. Икӗ кил ҫурри ҫунсан тин каланча ҫинче ҫывӑрса выртнӑ хуральҫӑсем шаккама тытӑнчӗҫ. Насусне туртса пычӗҫ, анчах ӗҫлемест. Пӑртак тӑрсан Ситал йалӗнчен пушар дружини ҫитрӗ. Вӗсем каллех ӗҫлемен насус илсе пычӗҫ. Пикшик насусӗ те ӗҫлемест—пырши хуҫӑк.

Дружинӑсенчи чунсӑр ҫынсене ответ тыттармалах.

А. Шорникӑв.

Пуҫланӑ ӗҫе тусах пӗтересчӗ

Иртнӗ ҫулта Чӑваш Ҫӗрӗҫ халӑх комиссариачӗн мелиораци пайӗ Аслӑ Мами йалӗнчи (Канаш р.) тарӑн ҫырмана пӗвелеттерсе пысӑк пӗве тутарчӗ. Анчах пӗвине туса пӗтернӗ пулин те, пӗвери ытлашши шыва йухса тӑмали канава халӗ те туса ҫитермен. Канава нимӗнпе те ҫирӗплетмен пирки иртнӗ ҫуркуннехи ҫурхи шыв канава ҫӗмӗрсе, ҫӗнӗрен ҫырма тӑва пуҫларӗ. Халӗ ку канава ҫӗнӗрен йусанӑ, анчах ҫирӗплетмен, ҫакӑн пирки канав ҫитес ҫуркунне ҫурхи шывпа пӑсӑласси курӑнсах тӑрать.

Тунӑ ӗҫ сайа ан кайтӑр тесен, ку канава халех бетонпа йе чулпа ҫирӗплетсе хӑвармала.

Г. Дмитрийӗв.

Германири выҫлӑх

Октабӗрӗн 3-мӗшӗнче фашисла Германи „тырпул праҫникӗ“ туса ирттернӗ. Фашисла Германин правительстви праҫник туса шавланипе кӑҫалхи йалхуҫалӑх ҫулӗ питӗ ӑнӑҫсӑр иртнине пытарасшӑн, ӗҫхалӑх массине улталасшӑн пулни пуриншӗн те паллӑ.

Фашисла влаҫсем кӑҫалхи тырпул мӗнле пулни ҫинчен хаҫат-журналсенче сведӗнисем пичетлесе кӑларма чарнӑ. Германи урӑхҫӗршывсенчен тырӑ мӗн чухлӗ кӳрсе килни ҫинчен официаллӑ сведӗнисене пичетленӗ хыҫҫӑн, Германире кӑҫал тырпул мӗнле пулни ҫинчен ҫырма пуҫӗпех чарнӑ. Германи ҫӗнӗ вӑрҫа хатӗрленнӗ май, урӑхҫӗршывсенчен тырӑ питӗ нумай илсе килет. Кӑҫалхи ҫулӑн малтанхи уйӑхӗсенче, иртнӗ ҫулхипе танлаштарсан, 10 хут ытларах илсе килнӗ. Ку вӑл Германи ҫӗнӗ вӑрҫа хатӗрленме пысӑк продовольстви запасӗ тунине кӑтартать. „Дейче гетрейдецейтунг“ хаҫат ҫаксем ҫинчен ҫырнӑ пулнӑ, уншӑн ӑна ҫийӗнчех арӗсленӗ, халӗ ӗнтӗ вӑл хаҫата кӑларма чарнӑ.

1936 ҫулӑн малтанхи ҫурҫулӗнче Германи урӑхҫӗршывсенчен 14 пин тоннӑ ыраш кӳрсе килнӗ пулсан, кӑҫал ҫак вӑхӑтрах 91 пин тоннӑ ыраш кӳрсе килнӗ. Иртнӗ ҫулта 49 пин тоннӑ тулӑ кӳрсе килнӗ пулсан, кӑҫал 596 пин тоннӑ кӳрсе килнӗ. Тулӑ ҫӑнӑхӗ кӳрсе килесси 4 пин тоннӑран 12 пин тонна ҫитиччен, урпа 50 пин тоннӑран 130 пин тонна ҫитиччен, сӗлӗ 3 пин тоннӑран 35 пин тонна ҫитиччен ӳснӗ.

1937 ҫулти ийунь уйӑхӗнче кӑна 49 пин тоннӑ ыраш, 296 пин тоннӑ тулӑ кӳрсе килнӗ. Ку вӑл 1936 ҫулӑн малтанхи ҫурҫулӑхӗнче кӳрсе килнинчен нумай иртет.

Тырпула уйхиртен пухса кӗме тытӑнсан, Германи урӑхҫӗршывсенчен тырӑ нумай кӳрсе килни, кӑҫал Германире тырӑ начар пулнине кӑтартса парать. Германире тырӑ мӗнле пулни ҫинчен нимӗнле сведӗни те пичетлесе кӑлармаҫҫӗ пулсан та, тырӑ мӗн чухлӗ авӑртни, пасарсемпе рынкӑсенче тырӑ сахалли кӑҫал Германире ырашпа тулӑ вӑтам шутран 15—20 процент начар пулни ҫинчен калаҫҫӗ. Америкӑри „Нйу-Йорк таймс“ хаҫат Германире тырпул мӗнле пулнине ҫапла хак парать:

„Авторитетлӑ ҫынсем каланӑ тӑрӑх кӑҫал тулӑпа ыраш вӑтам шутран 15 процент начар пулнӑ. Пӗтӗм Германире иртнӗ ҫулсенче тулӑ пурӗ те 4,5 мӗлйун тоннӑ ҫеҫ пуҫтарса илнӗ. Кӑҫал ку цифӑр 4,0 мӗлйун тоннӑ ҫеҫ йулать. Ыраш вӑтамран 7,6 мӗлйун пӑт пуҫтарса илнӗ пулсан, кӑҫал 6,0 мӗлйун тоннӑ ҫеҫ пулать“.

Германи йалхуҫалӑхӗ тырӑ начар пулнипе ҫеҫ мар, ҫавӑн пекех акмали ҫӗр лаптӑкӗ чакса пынипе аптӑрать. Ҫапла, 1936 ҫулхипе танлаштарсан, кӗрхи тырӑ акмали ҫӗр плошчӗдӗ 96,6 процент ҫеҫ тӑрса йулнӑ, кӗрхи ыраш акмали 94 процент ҫеҫ тӑрса йулнӑ.

Акмали ҫӗр лаптӑкӗ тырӑ лайӑх пулакан ҫӗрсене ҫар ведӑмстви аллине панӑ пирки чакса пырать. Ку тӗлӗшпе Англири „Таймс“ хаҫат ҫырса пӗлтерет. Хаҫат ҫырнӑ тӑрӑх, Германин хӑйӗн халӑхне тата выльӑх-чӗрлӗхне тӑрантарса усрама ҫителӗклӗ таран ҫӗр ҫук. Ҫапла пулин те 1933 ҫулхипе танлаштарсан, аэродромсем, шоссе ҫулӗсем, ҫар смотӑрӗсем вальли тӗрлӗ плошчадкӑсем тунипе акмали ҫӗр лаптӑкӗ пӗрмайах сахалланса пырать. Англири тепӗр хаҫат—„Дейли геральд“ ҫырса пӗлтернӗ тӑрӑх, Гитлӗр власа илнӗ хыҫҫӑн, ҫӗнӗ вӑрҫа хатӗрленнӗ пирки, акмали ҫӗр лаптӑкӗ 5 процент ытла чакнӑ. Вӑйлӑ укреплениусем, казармӑсем, стратегилӗ ҫулсем, тата ыттисем тума тырӑ лайӑх пулакан вырӑнсене туртса илнӗ. Ҫӗре ҫемҫетесси начарланнӑ. Ҫӗре калипе тата азотпа ҫеҫ ҫемҫетеҫҫӗ.

Продовольстви кризисӗ сивӗчленсе пынӑ пирки правительствӑ 1937 ҫулхи пӗтӗм тырпула хӑйӗн аллине пуҫтарса илесшӗн тӑрӑшать. 1937 ҫулти ийулӗн 27-мӗшӗнче кӑларнӑ саккун тӑрӑх, кӑҫал пуҫтарса илнӗ ыраша тата тулана йалтах патшалӑха памала. Ҫемйе вальли кӑшт хӑварнӑ хыҫҫӑн, мӗн чухлӗ тырӑ йулать, ӑна влаҫсем ирӗксӗрлесе туртса илеҫҫӗ. Правительствӑ кашни ҫын вальли мӗн чухлӗ тырӑ хӑвармалине кӑтартса нормӑ тунӑ. Ҫак нормӑран пӗр колиграм та ытлашши хӑварма йурамасть. Ҫак саккунӑ пӑсакансене тӗрмене хупаҫҫӗ, штраф хурса пурлӑхсене туртса илеҫҫӗ.

Ҫӗнӗ саккуна питӗ ҫирӗппӗн пурнӑҫа кӗртеҫҫӗ. Кам мӗн чухлӗ тырӑ авӑртнине, тырра ӑҫта турттарса кайнине, мӗнле тата ӑҫта пӑхса усранине, выльӑхсене мӗнле тӑрантарнине полици асӑрхаса тӑрать. Хресчӗнсене полици пусмӑрӗ хӗсе ҫитернӗ.

Патшалӑх хӑйӗн хӗҫпӑшаллӑ вӑйӗсемпе хӗснипе фашисла правительствӑ кӑҫал пурӗ 11 мӗлйун тоннӑ ыраш тата тулӑ пуҫтарса илме ӗмӗтленет. Анчах ҫак цифӑр кӑҫал тырӑ начар пулнине пытарса хӑвармали сӑлтав ҫеҫ.

Германире тӗш тырпул хуҫалӑхӗ ҫеҫ мар, выльӑх-чӗрлӗх хуҫалӑхӗ те питӗ хӑвӑрттӑн кайала чакса пырать. Германири „Франкфрутер цейтунг“ хаҫат ҫырнӑ тӑрӑх, выльӑх апачӗ ҫитмен пирки, кӑҫал выльӑх-чӗрлӗх шучӗ нумай чакнӑ.

Ийунь уйӑхӗнче туса ирттернӗ перепиҫ, иртнӗ ҫулхипе танлаштарсан, Германире сыснасен хисепӗ 11 проц. ытла чакнине кӑтартать. Апат ҫитмен пирки хресчӗнсем выльӑхсене ӗрчетме пӑрахаҫҫӗ, пуррисене те пусса пӗтереҫҫӗ.

Ҫара продовольстви тата выльӑх апачӗ парса тӑрас шутпа фашисла влаҫсем хресчӗнсене нимӗнсӗр тӑратса хӑвараҫҫӗ. Уйрӑмах вакӑ тата вӑтам хресчӗнсем шутсӑр хытӑ хӗн кураҫҫӗ. Хресчӗнсем фашисла режима хирӗҫ тӑрасси вӑйланса пырать. „Дейче фолькцейтунг“ хаҫат хресчӗнсен шухӑшӗ ҫинчен ҫапла ҫырса пӗлтерет: „Хресчӗн хуҫалӑхӗсене ирӗксӗр ӗҫлеттермелли лагӗр туса хунӑ. Ҫав лагӗрсенче хресчӗнсем пралук карнӑ картасенче штрафсемпе приказсем хӑратнипе крепостниксем пек ӗҫлеҫҫӗ. Тырпула ирӗксӗр илни вак тата вӑтам хресчӗнсене нимӗнсӗр тӑратса хӑварчӗ. Халӗ ӗнтӗ вӗсем ӗлӗк усранӑ выльӑхӗсенчен ҫуррине те усраймаҫҫӗ“.

Фашисла правительствӑн чрезвычайлӑ ӗҫӗсем ҫӗршывра выҫлӑх хӑрушлӑхӗ ӳснине кӑтартаҫҫӗ. Кӑҫал Германири ӗҫҫыннисен апат-ҫимӗҫӗ ҫӗрулми пулать.

„Халӑхӑн пиҫихисене хӗстерес пулать,—тесе ҫырать „Дейли телеграф“ хаҫат,—варҫӑ ҫулӗсенчи пекех пурӑнас пулать, ҫӗрулми тӗп ҫимӗҫ пулать. Кӑна пула апкакай та сахал пулать. Мӗншӗн тесен, ҫӗрулми выльӑха мар, ҫынсене ҫиме кайать. Ҫакна пула сыснасен шучӗ чакать. Халӗ ӗнтӗ Германи халӑхне лаша какайӗ ҫини усӑлӑрах тесе вӗрентме тытӑннӑ.

1937 ҫултан пуҫласа ҫӑкӑр сахалланса пырать. Кун ҫинчен тырӑ сахал авӑртни лайӑх каласа парать. Март уйӑхӗнче Германире 385 пин тоннӑ тулӑ авӑртнӑ пулсан, апрель уйӑхӗнче 365 пин тоннӑ ҫеҫ авӑртнӑ. Ыраш ҫӑнӑхӗ авӑртасси те пӗрмайах чакса пырать.

Ыраш тата тулӑ ҫӑкрине кукурус тата ҫӗрулми ҫӑнӑхӗпе хутӑштарса пӗҫереҫҫӗ. Ҫӑкӑра пӗҫерсен 24 сехет хушши сутмасӑр тӑраҫҫӗ. Мӗншӗн тесен халӗ ҫеҫ пиҫсе тухнӑ ҫӑкӑра нумай ҫисе йарасран хӑраҫҫӗ. Ҫакӑ вӑл Германи халӑхне вӑрҫӑ ҫулӗсенчи выҫлӑх вӑхӑтне аса илтерет.

Бйукеберг сӑрчӗ ҫинче иртнӗ ҫулта туса ирттернӗ „тырпул“ праҫникӗнче фашиссен пуҫлӑхӗ Гитлӗр ҫапла каланӑ: „Германире тырпул туса илесси ҫитес ҫулта 20 процент чаксан, ку вӑл катастрофӑ пулнине пӗлтерет“. Ҫулталӑк иртрӗ. Германире тырпул туса илесси Гитлӗр хӑраса каланинчен те ытла чакнӑ.

Ҫӗнӗ Шелттемӗн ҫамрӑкӗсем

КАНАШ. Ҫӗнӗ Шелттем йалӗнче кӑҫал 1915—16 ҫулсенче ҫуралнӑ ҫамрӑксем 10 ача Хӗрлӗ ҫар ӗретне кайма йурӑхлӑ пулчӗҫ.

Вӗсен пурин те професи пур: пӗри шофӗр, тепри—учитӗл, виҫҫӗмӗшӗ—ҫӗрйӗркелекен, унтан: ветсанитарсем, слесӑрсем. Кӑкӑрӗсем ҫинче—ГТО, ПВХО, ГСО, ворошиловла тӗл перекенсен значокӗсем.

Ив. Радикӑв.

Ҫамрӑк гравйор Белов

УЛАТӐР. Художествӑлла гравюрӑ шкулӗнче вӗренекен студент Белов Потр гравюрӑпа питех те интересленет. Ҫулахи кану вӑхӑтӗнче вӑл „Канашри автовокзал“, „Ыраш пуссинче“ тата ытти картинӑсем ҫырчӗ.

Халӗ акӑ Белов тӗрлӗ краскӑпа ӳкермели гравюрӑ тума тытӑнчӗ. Аслӑ Октабӗр революци 20 ҫул тултарнӑ тӗле вӑл сарлака композицилӗ картинӑ хатӗрлет.

Белов шкулта гравюрӑпа „хорошо“ те „отлично“ паллӑсем илсе пырать.

П. Чичиканов.

Йӗркелӗ иртереҫҫӗ

ТУРХАН. Липавкӑри Ленин йачӗпе гӑрахан ертел членӗсем хушшинче „ССР Сойузӗн Аслӑ Советне суйламали Положенине“ вӗренме кружок организациленӗ. Занйатисем кружокра йӗркелӗ иртсе пыраҫҫӗ. Планпа мӗн пурӗ 35 сехет вӗренмелле. Кружока ертел председателӗ Т. Асанӑв йертсе пырать.

И. Архипӑв.

Чейелĕх хӳттинче пурăнакан националис

Буржуалă националиссем идеологи фронтне пысăк хака хурса, вăл ĕҫре уйрăмăнах пысăк сăтăр туни паллă ĕнтĕ. Шкулсене, литературă фронтне хĕсĕнсе кĕрсе, вĕсем пире чылайăх пысăк йăвăрлăхсем умне кăларса тăратрĕҫ.

Чăвашсен йалхуҫалăх рабфакĕнче ҫак тăшмансен йăви пулнă. Йе. Захарăв тата А. Золотăв директăр пулса ĕҫленĕ, преподавательсем пулса Ширйайĕв, Ивано П. И., Тарасăв И. Т., Петров М. П., Елмен, Михайлăв тата ыттисем те ĕҫленĕ. Вĕсем хăйсем туха кайнă чухне, рабфака хăйсен агенчĕсене лартса хăварма тăрăшнă. Сăтăрлă ĕҫе пытарса хăварма хăтланнă, ҫĕнĕрен уҫăлса пыракан шкулсенче тымарсем йама пикеннĕ.

Йе. Захарăв, кулаксемпе улпутсен йăхĕ, рабфакра 1929 ҫулччен ĕҫлет те, А. Золотăв пулăшнипе усă курса, рабфака хăйĕн тăванне—Йа. Захарăва сĕтĕрсе килет. Йа. Захарăв Шупашкара ҫитсенех, хăйĕн „хӳрине" Йдобайĕва хăйсем патнеле сĕтĕрме тытăнат. Ҫапла вара рабфакра халăх тăшманĕсем йăва ҫавăраҫҫĕ: А. Золотăв—директăр, Йа. Захарăв—вĕренӳ ĕҫĕн пуҫлăхĕ; Ширйайĕв хăй туха кайат те, арăмне хăварат.

Ҫак тăшмансенчен пĕри—Йа. Захарăв йалхуҫалăх рабфакĕнче йулашки кунсене ҫитех пытанса пурăннă.

Сурăх тирне тăхăннă кашкăр Йа. Захарăв хăйне лăпкă, сийенсĕр ҫын пек кăтартма пăхат. Анчах ĕҫпе вăл хăйар тăшмансене пулăшса пырат. И. Тарасăв белогвардейцăна лайăх характеристикăсем парат, вăл красноармейцăна нерсе вĕлерни тĕрĕс пулмарĕ тесе ĕнентерме тăрăшат. Ҫамрăк преподавательсен авторитетне ҫухатма, вĕсенчен сăлтавсăрах мăшкăлама хăтланат. Ҫамрăк кадрсене ĕҫе куҫарса пырассине пур майсемпе те чарса лартассишĕн кĕрешет. Мĕншĕнни паллă: буржуалă националиссем ҫамрăк кадрсенчен вут-кăвартан хăранă пек хăраҫҫĕ.

Йа. Захарăв йаланах Йе. Захарăвпа, Тарасăвпа, Ширйайĕвпа ҫыхăнса тăнă. Семенăв троцкиста тĕрлĕ майпа хӳтĕлесе пурăннă. Вăл Йе. Захарăв ăҫта, мĕн тума ӳренисене, камсем заданисем парса йанине лайăх пĕлсе тăрат, ăна пур майпа та пытарма тăрăшат. Ҫавăн пекех, рабфакри вĕренӳ ĕҫĕн заведуйушчийĕ пулса ĕҫленĕ вăхăтра троцкисла литературăна пытарса хăварни те унăн тăшманла сăн-сăпатне лайăххăнах уҫса парат.

Кунсăр пуҫне, вĕренӳ ĕҫĕнче те Йа. Захарăв сăтăрҫăла ĕҫлесе пынине палăртма пулат. Вĕренӳри сăтăрла ĕҫсен йĕрне шăлса хăварас майпа, вăл вĕренекенсене преподавател мĕн каланине тетрадсем ҫине ҫырса пымала мар, пуҫра тытмала, пире те ҫавăн пек вĕрентнĕ, тесе Чĕмпĕрти Йаковлĕв шкулĕн ĕҫ меслечĕсене аталантарма тăрăшнă.

Коммунистсем ҫинчен елеклесе ҫӳренисĕр пуҫне, Йа. Захарăв патшалăх укҫи-тенкине ҫаратассине те хирĕҫ мар. Страхкассăри руководителĕсен политикăла тимсĕрлĕхне пула, ҫак чейе тăшман ку таранччен кашни уйăхра 75-шер тенкĕ пенси илсе тăрат.

Пайанхи кунччен ăна Сутĕҫ халăх комиссариачĕ совет учителĕсен шутĕнче тытса тăрса, ҫак тăшмана совет шкулĕн йатне варалама май парат. Йалхуҫалăх рабфакĕнче вĕренӳ ĕҫĕн пуҫлăхĕнчен кăларнă хыҫҫăн, ăна пединститута вĕренмекĕме хатĕрлекен курса преподавател пулса ĕҫлеме илеҫҫĕ.

Пире ҫакă тата тĕлĕнтерет. Рабфакри профсойуз организацийĕ ҫентабĕрĕн 18-мĕшĕнче Йа. Захарăв рабфакра тата профсойузра тăма тивĕҫлĕ мар тесе йышăннă, анчах вăтам тата пуҫламĕш шкулсенчи работниксен сойузĕн (председателĕ Владимирăв) облăҫри комитечĕ халиччен те ҫав ĕҫе пăхса тухман-ха.

Захарăвсен тусĕсем йалхуҫалăх рабфакĕнче татах та пур. Вĕсене совет шкулĕсенчен тĕпĕ-йĕрĕпех тасатмала.

Н. Йурйĕв.

Тракри бӳрократсем

Трак райĕҫтăвком председателĕ Липатăв йулташ та, райĕҫтăвкомăн тĕрлĕ пайĕсен пуҫлăхĕсем те ĕҫсынниссен жалăбисене пăхса тухса, татса пама йуратмаҫҫĕ.

Райĕҫтăвкомăн тата унăн пайĕсен жалăбăсене шута илсе пыракан ҫынсем пур. Вĕсем килекен жалăбăсене кĕнеке ҫине ҫыраҫҫĕ те, „аслисене" параҫҫĕ, „аслисем" ҫав жалăбăсем ҫине резолюци хураҫҫĕ. Резолюци хунă хыҫҫăн, ĕҫсынниссен жалăбисем тăрăх кам мĕн тунипе райĕҫтăвком председателĕ Липатăв йулташ та, ытти ответлă работниксем те, никăҫан та никам та интересленмеҫҫĕ. Резолюци хунă хыҫҫăн вара волокитă пуҫланса кайат.

Трак райĕҫтăвкомне 1937 ҫулта ҫентабĕрĕн 20-мĕшне ҫитиччен 117 жалăбă пырса кĕнĕ. Йĕркелĕ ĕҫлесен, райĕҫтăвком икĕ кунта пĕр жалăбă та пулин пăхса тухсан, ĕҫ йĕркелех пулмала. Анчах траксем кунпа килĕшмеҫҫĕ. Вĕсем 48 жалăбă ҫеҫ пăхса тухнă, 69 жалăбă тăрăх мĕн туни халĕ те паллă мар. Ҫав 69 жалăбăна тĕрĕслеме райĕҫтăвком председателĕ Липатăв резолюци хурса панă, анчах вĕсем уйрăм ҫынсен портфĕлĕнче 5—6-шар уйăх „тĕрĕсленсе" выртаҫҫĕ. Липатăв йулташ хăй резолюци хунă хыҫҫăн, жалăбăсем тăрăх кам мĕн тунине тĕрĕслемен пирки, райĕҫтăвком работникĕсем жалăбăсене ҫухатаҫҫĕ. Ҫирĕклĕри Кирăв йачĕпе тăракан колхоз членĕ Ф. Иванов жалăби апрелĕн 17-мĕшĕнче Чăваш Тĕпĕҫтăвкомĕнчен райĕҫтăвкома пырса кĕнĕ. Ҫав жалăбăна хăварт пăхса тухма Чăваш АССР Тĕпĕҫтăвком председателĕ Никитин йулташ Трак райĕҫтăвком председательне Липатăва хушнă. Райĕҫтăвком ҫак жалăбăна ҫухатнă. Ҫапла вара Трак райĕҫтăвкомĕ ĕҫсыннисен нушисем ҫине йĕрĕнсе пăхни, жалăбăсем ҫине чиновникле пăхни куҫ умĕнчех. Жалăбăсем ҫине чиновникле пăхакансене, уйрăмах ҫухатакансене совет учрежденинче ĕҫлеме те намăс.

Районри ҫĕрĕҫ пайĕн пуҫлăхĕ Г. Герасимăв хăй патне пыракан жалăбăсенчен йĕрĕнсе ҫапла калат:

— Мĕн мур ҫитмест ҫав колхозниксемпе йединоличниксене, жалăбă парса лараҫҫĕ, курас килмест ҫав жалăбăсене. Мĕнле хăтăлас ку усал жалăбăсенчен, тет. Герасимăв ҫакăнпа хăй ĕҫсыннисен ӳсĕсе пыракан политикăла хастарлăхне путарма хăтланнине уҫҫăнах кăтартат. Вăл ҫав кашни жалăбă хыҫĕнче чĕрĕ ҫын тăнине нимĕн те шута илмест. Жалăбă вăл пирĕн совет, хуҫалăх оргăнĕсен ĕҫĕнчи ҫитменлĕхсене, колхозсенче йалхуҫалăх ертелĕн уставне пăсса ĕҫленисене пĕтермели майсенчен пĕри пулнине Герасимăв йышăнмаст.

Ансăртран мар ĕнтĕ, ҫĕрĕҫ пайне пырса кĕнĕ 333 жалăбăран 47 жалăбăне 3—6 уйăхра та пăхса тухман, ҫĕрĕҫ пайĕнчи чиновниксем колхозниксен жалăбисене хакламаннине ҫак факт лайăх кăтартса парат. Шăнарти „Орден Ленина" колхозри бригадирăн—Петровăн ирсĕр ĕҫĕсем ҫинчен апрелĕн 19-мĕшĕнче ҫĕрĕҫ пайне жалăбă пынă. Ҫак ĕҫе Герасимăвăн хăйĕн тĕрĕслесе тухмала пулнă. Анчах вăл ҫав жалăбă тăрăх нимĕн те туман. Чăваш Тĕпĕҫтăвкомĕнчен пынă представител ҫав жалăбăна ăҫта чикнине ыйтсан, Герасимăв нимĕн калама та пултараймаст. Кĕнеке ҫинче шырат, унта ҫук. Ҫав бригадир ҫинчен жалăбă панă ҫынна шыраса Чадуккасси йалсоветне икĕ хутчен кайса килнĕ. Анчах жалăби хăйпе йунашар ларакан шкафра тусан айĕнче выртнă. Жалăбăна тĕрĕслесен Петров тăшманла ĕҫ тунипе тупса палăртнă. Ĕҫсыннисен сигналĕ ҫине бӳрократла пăхни тăшмана 5 уйăх хушши киревсĕр ĕҫсем тума пулăшнă. Ку ҫеҫ те мар, колхозник колхоз правленни устава пăсса ĕҫлени ҫинчен паракан жалăбăсене районти ҫĕрĕҫ пайĕ хăй тĕрĕслесе тухас вырăнне, каллех колхоз правленине йарса тăнă.

Трак райĕҫтăвкомĕ тата унăн пайĕсенче ĕҫйалкорсен ҫырăвĕсем ҫине те хут татăкĕ ҫине ..хнă пек пăхаҫҫĕ. Хаҫат редакцисем йанă ҫырусем 6—7 уйăх йăваланса выртаҫҫĕ. Акă Шпонкăри „Правда" колхоз йапăх ĕҫлени ҫинчен ҫырнă заметкă апрелĕн 11-мĕшĕнчен вара Филиппăв агроном аллинче выртат. Ҫак асăннă фактсем Трак райĕҫтăвкомне, унăн пайĕсене хытă айăпласҫĕ. Ҫак фактсем Трак райĕҫтăвкомĕ бӳрократ чирĕпе чирлени ҫинчен калаҫҫĕ. Ҫак чиртен халтерех сывалмасан, вĕсене советсен суйлавĕ райĕҫтăвком аппаратĕнчен тимĕр шăпăрпа шăлса ыватĕ.

Р.

4 кружок организациленĕ

КӲКЕҪ. Сарапакасси йалсоветĕнче „ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламали Положенине" вĕренме 4 кружок организациленĕ. Колхозниксем заңатисене активлăн ҫӳреҫҫĕ. Кружоксене учителсем йертсе пыраҫҫĕ.

Г. Ҫеребрйаков.

20 ҫул ĕлĕкрех.

ӲКЕРЧĔК ҪИНЧЕ: 1917 ҫулта хресченсем помещик ҫурт-йĕрне аркатаҫҫĕ. П. Васийлĕв картининчен илнĕ (ССР Сойузĕн револуци музейĕ).

(Сойузфото).

Хаҫатсене пăхса тухни

„Ударник" хаҫатăн тĕлĕнмеле позицийĕ

„Правда" хаҫат контрреволуцилĕ буржуалă националиссен сăтăрлă ĕҫĕсем ҫинчен пичетлекен материалсем пирĕн хаҫатсене: троцкисла-бухаринла бандăсемпе ҫахăнса кайнă контрреволуцилĕ буржуалă националиссене тупса палăртса вĕсене пĕр ҫын хăварми кăкласа ывăтас, вĕсем тунă сăтăрлă ĕҫсен йулашкисене пĕтерес тĕлĕшпе болшевикла пичете тивĕҫлĕхпе кĕрешме ҫул кăтартса параҫҫĕ.

ПСК(б)П Чăваш Обком бӳровĕ 1937 ҫ. ҫентабĕрĕн 14-мĕшĕнче йышăннă постановленире хаҫатсем пирки тӳрех ҫапла каланă:

„Республикăрипе районсенчи хаҫат редакцисен „Правда" хаҫат нацилĕ республиксенчи хаҫатсене пăхса тухнисенчен хăйсене валли урок тумала, контрреволуцилĕ националиссене тупса палăртса пĕтерес тĕлĕшпе чăн-чăн кĕрешӳ организацилемеле, ку ĕҫре парти организацисене пулăшмала".

„Ударник" хаҫат ҫак кăтартусем ҫинчен маннă. Хаҫат контрреволуцилĕ буржуалă националиссене тупса палăртас тĕлĕшпе пӳрне ҫине пӳрне те хумаст.

Хаҫат ҫапла йăваш чунланса ларнă вăхăтра контрреволуцилĕ буржуаллă националиссем хăйсен сăтăрлă ĕҫне тăваҫҫĕ. Кун пирки хаҫат редакцине вырăнсенчен сигналсем килеҫҫĕ. „Шĕнерпуҫ участкинче комсомолĕссен парти историне вĕренмели кружок руководителĕ Архипăв есерсене мухтанă", тесе хаҫат ҫентабĕрĕн 24-мĕшĕнче кăшт аса илет. Анчах хаҫат ҫак сигнал кăтартнă йĕрпе кайса тăшмансене тупса палăртас тĕлĕшпе нимĕн те тумаст.

Кунашкал сигналсем редакцинче пулнă. Редакцинче буржуалă-националис Йевграфăв тăвакан киревсĕр ĕҫсем ҫинчен те статйа пулнă. Анчах редакци (редактăр Мелникăв йулташ) ҫак материала хаҫатра пичетлесе кăларас вырăнне парти райкомне йанипех лăпланат. Райкомра вăл материала хăй патĕнче пĕр уйăх ытла нимĕн пăхмасăр выртарат.

Районта буржуалă националиссем киревсĕр ĕҫсем туни ҫинчен Хуракассинчи колхозри ĕҫ те лайăх ҫирĕплетет. Хаҫат тăшмансемпе килĕшес ҫул ҫине тăнă.

Хаҫатăн хăйĕн политикăлă тимсĕрлĕхне, йăвашчунлăхне пĕтерсе, контрреволуцилĕ буржуалă националиссене, троцкисла-бухаринла бандăсене хирĕҫ татăклăн кĕрешмеле. Халăх тăшманĕсене пĕр ҫын хăвармиччен пĕтерессишĕн кĕрешесси хаҫатăн калхи вăхăтра чи пысăк та ответлă задачă. Ҫакна ăнланса илме вăхăт ҫитнĕ.

Аслă Совета суйлас умĕн

Колхозниксем кружоксенче вĕренеҫҫĕ

ТРАК (хамăр корр.). Аслă Совета суйламали Положенине вĕренессине хăшпĕр йалсовечĕсенче аван йĕркеленĕ.

Тĕрер йалсоветĕнчи 6 колхозĕнче те кружоксем ĕҫлеҫҫĕ. „Правда" колхозра 33 ҫын, „Калинăвкă" колхозра 37 ҫын кружоксене вĕренме ҫӳреҫҫĕ. Кружокра вĕренес активлăх пысăк. 72 ҫулхи Алексей Петров, 83 ҫулхи Роман Зиновйĕв заңатисене пĕр сиктермесĕр ҫӳреҫҫĕ.

Йеншик Чуллă йалсоветĕнчи „Ҫĕнĕ вăй" колхозри кружокра 25 ҫын вĕренет. Заңатисем 6 кунра пĕрре пулса иртеҫҫĕ. Ку кружоксене учителсем йертсе пыраҫҫĕ. Вĕсем заңатисем иртерме лайăх хатĕрленеҫҫĕ. Ыйтусем ҫине татăклă, ăнланмала ответсем параҫҫĕ.

Именкасси йалсовечĕ кашни колхоз ҫумне 2-шер учител ҫирĕплетнĕ. Вĕсем кашни колхозрах йĕркерен заңатисем ирттереҫҫĕ. Заңатисем иртернĕ ҫĕре Аслă Совета суйлас схемасемпе картăсем тата хаҫатра тухнă материалсене илсе пыраҫҫĕ. Ҫаксем тăрăх кашни колхозник Суйлав Положенине тĕплĕн ăнланма тăрăшат.

Ив. Моҫҫейĕв.

Комсомолăн облăҫри XIV-мĕш конференцийĕ

Октăбĕрĕн 4-мĕш. Каҫхи лару

Пренире Касимăв (Шăнкăртам р.), Никифăрăв (Пăрачкав), Валцĕвич (Ҫĕмĕрле), Воробйов (Шупашкар), Черкасова, Захарăв (Хĕрлĕ Чутай), Сперански (Кӳкеҫ), Ловин (Патăрйел) тата Иванова (Ишлей) йулташсем тухса калаҫрĕҫ. Халăх тăшманĕсен контрреволуцилĕ ĕҫĕсене ҫутатса, вĕсем ҫĕнĕрен те ҫĕнĕ фактăсем кăтартрĕҫ.

Воробйов йулташ пионерсемпе ĕҫлесси ҫинĕ комсомол организацийĕ ку таранччен пачах ҫителĕксĕр ҫавăрăнса пăхнине, коммунисла воспитани ĕҫне комсомол Обкомĕ йут ҫынсене шанса панине, пионер лагĕрсенчи киревсĕр ĕҫсене кăтартрĕ.

Иванова йулташ уйрăмăнах политвĕренӳ ĕҫĕ ҫинче чарăнса тăчĕ.

— Ку ĕҫ халĕ шутсăр йапăх пырат. Ҫулахи вăхăтра политкружоксенчен нумайĕшĕ чăнах та ĕҫлемерĕҫ. Мĕншĕн тесен ку ĕҫе пĕтĕмпех политвĕренӳ пайĕсен пуҫлăхĕсем ҫине йăвантарнă, Обком тата райком секретарĕсем хăйсем ҫинчен ответлăха йăлтах сирнĕ,— тет Иванова й. Малала вăл ĕҫе лартнă ҫĕнĕ кадрсене Обком пачах пулăшманнине паллă тăват.

Каҫхи ларура конференци ПСК(б)П Шупашкар хула комитетĕнче ĕҫлекен И. Петров ĕҫне пăхса тухрĕ. Комсомол Обкомĕнчи йĕркесĕрлĕхсене пĕлнĕ ҫинчех Сымокинпа Терентйева тăрă шыв ҫине кăларманшăн, Сĕнтĕрвăрри районĕнчи пуҫламĕш комсомол организацийĕсене салатса йанă Иванова районри конференцинче райком пленумĕн составне тата райком секретарне суйланма май панăшăн, хăйне икĕ питлĕ тыткаланăшăн ăна конференцинчен кăлармала турĕ.

Октăбĕрĕн 5-мĕш. Ирхи лару

Конференци комсомол Обкомĕн ревизи комиссин председателĕ Соколов йулташăн йулашки сăмахне итленĕ хыҫҫăн, ревизи комиссин отчотне ҫирĕплетрĕ.

Мандат комиссин председателĕ доклад туса пачĕ. Унăн доклачĕ тăрăх ҫакна курма пулат. Конференцире 173 делегат. Вăл шутран комсомолкăсем 54 ҫын.

Иртнĕ конференцисемпе танлаштарсан комсомолри ҫамрăксем чылай ӳсни палăрат. Конференци делегачĕсенчен 5 орденоносцă, 21 стахановцă, инженерла-техникла работниксем 4 ҫын, йалсовет председателĕсем 5, колхоз председателĕсем—4, бригадирсем 5, тракторисем 6, пĕр комбайнер, 27 пропагандис, комсомол райкомĕн секретарĕсем 18 ҫын тата ытти те.

97 ҫын облăҫри комсомол конференцине пĕрремĕш хут килнĕ. Ҫав вăхăтрах ҫакна каламала. Вырăнти учителсенчен, колхозниксенчен делегатсем сахал. Студентсем те 2 ҫеҫ.

Конференцине килнĕ делегатсенчен аслă шкул пĕтернисем 11 ҫын, вăтам шкул пĕтернисем 54, йалти шкулта вĕреннисем 56 ҫын. Иртнĕ конференцисенче хутла сахал пĕлекен делегатсем пулнă пулсан, халĕ ун пеккисем пĕр ҫын та ҫук. Конференци комсомол обкомĕн ревизи комиссин ĕҫĕсене начар тесе йышăнчĕ. Ирхи ларура конференци суйлав ĕҫне тытăнчĕ. Комсомол Обкомĕн пленум членĕсене 45 ҫын, кандидатсене 13 ҫын суйлама йышăннă. Комсомол Обкомĕн членĕсене суйлама 84 кандидат палăртнă. Конференци кандидатсем ҫинчен тĕплĕ сӳтсе йавма тытăнчĕ.

Конференци ĕҫĕ питĕ активлă пырат. Самокритикă вăйлă. Конференци ĕҫе тытăннăранпа халăх тăшманĕсене, йе вĕсене хӳтĕлекенсене 10 ҫынна конференцирен кăларса йанă.

Йемелйанăв йулташ сăмахĕ

(Тутаркас районĕ)

Комсомол обкомĕн III-мĕш пленумĕнче лайăх решенисем йышăннăччĕ. Сăмахран, пропагандă ĕҫне лайăхлатасси, пропагандиссем валли екскурсисем тăвасси ҫинчен т. ыт. Ҫак лайăх решенисем хут ҫинчех йулчĕҫ. Комсомол обкомĕ ку решенисене мĕнле пурнăҫланине тĕрĕслемен те.

Халăх тăшманĕсем колхозсене аркатас тĕлĕшпе вирлĕн ĕҫлеҫҫĕ. Вĕсем лайăх ĕҫлекен работниксем ҫинчен тĕрлĕ сăмахсем сараҫҫĕ. Иртнĕ пленумра епĕ Йелникăвăн ирсĕр ĕҫĕсем ҫинчен каланăччĕ. Йелникăв Шомик йалсовет председателĕ Тйамки йулташа хирĕҫ кĕрешме группă организациленĕ. Комсомол Обкомĕ кун ҫинчен пĕлнĕ пулсан та, Йелникăва пропагандис ĕҫне лартнă. Йелникăв кружок заңатисенче совета хирĕҫ елексем сарнă. Вăлах вулав ҫурчĕн пуҫлăхĕнче те ĕҫленĕ.

Халăх тăшманĕсем културлă учреждисенче те сăтăрла ĕҫсем туса пурăннă. Тутаркасри районти райҫутĕҫ пайĕн пуҫлăхĕ Пожеданăв шкулсенче ĕҫлекен тăшмансемпе кĕрешмен, вĕсене витсе, пытарса пурăннă. Мĕншĕн тесен вăл хăй те халăх тăшманĕ пулнă.

„Красная Чувашия" хаҫатра епĕ Челушкин ҫинчен вуларăм. Челушкин вăл халăх тăшманĕ. Вăл Йетĕрнери районри конференцинче троцкисла шухăшсемпе тухса калаҫнă. Ку троцкис халĕ те Кубасри кĕсĕн вăтам шкулра директăр пулса ĕҫлет. Ăна кĕске вăхăтрах тăрă шыв ҫине кăлармала.

Тутаркас районĕнче пионер ĕҫне М. Ҫимаков йулташ йертсе пырат. Ҫĕнĕ работник. Ăна вăхăтра пулăшни, кăтартни кирлĕ. Комсомол обкомĕн пионер пайĕн пуҫлăхĕ Сорокин йулташ пионер ĕҫĕпе начар ĕҫлет. Унăн районсене тухса, уйрăмах ҫĕнĕ работниксене вырăнта пулăшмала.

Епĕ кружокпа йертсе пыратăп. Анчах манăн ĕҫпе никам та интересленмест, никам та пулăшу памаст. Штатлă пропагандиссене пулăшни, вĕрентни кирлĕ. Ман шутпа пропагандиссене курссем, шкулсем витĕр вĕрентсе кăлармала.

Студентсем суйлав саккунне колхозниксене вĕрентеҫҫĕ

СĔНТĔРВĂРРИ. Йалхуҫалăх техникумĕнчи студентсемпе комсомолĕссем политзаңатисенче „ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламали Положенине" вĕренеҫҫĕ.

Техникумри комсомол комитечĕ политзаңатисене йертсе пыма комсомолĕссенчен пропагандиссем уйăрнă. Халĕ заңатисем йĕркелĕ пулса пыраҫҫĕ. Суйлав Положенине студентсем пысăк хаваслăхпа тăрăшса вĕренеҫҫĕ.

Кунпа пĕрлех, студентсем йалсене тухса, „ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламали Положенине" колхозниксене ăнлантарса парас тĕлĕшпе ĕҫлеҫҫĕ.

Техникум районти Пысăк Маклашкина, Пĕчĕк Маклашкина, Кукашне, Йурйĕвка йалĕсене шефа илнĕ. Ку йалсенче хал суйлав Положенине вĕренес ĕҫ ăнаҫлăн пырат.

Г. Ҫмирнов.

„Шмидт" колхоз членĕсене

(Куҫмин красноармейцăн иккĕмĕш ҫырувĕ)

Аслă Совета суйлас ĕҫ—калама ҫук пысăк политикăла кампани. Суйлава тивĕҫлипе ирттересси суйлав комиссийĕсенчен те нумай килет. Пирĕн аслă совет ҫĕршывĕнче мĕн пур суйлав ĕҫĕпе Тĕп суйлав комиссийĕ йертсе пырат. Тĕп суйлав комиссинче председател, унăн заместителĕ, секретарĕ тата 12 член пулат. Тĕп суйлав комиссийĕ обчăлă организацисемпе ĕҫхалăхĕн обшчĕстви представителĕсенчен тăрат. Вăл комисси суйлав саккунне пурнăҫа кĕртсе пынине тĕрĕслесе тăрат, суйлав комиссисем тĕрĕс мар ĕҫлени ҫинчен панă жалăбăсене пăхса тухса татса парат. Суйлав бӳллетенĕсен, йешчĕксен, конвертсен, спискăсен тĕслĕхĕсене т. ыт. тăват, суйланнă депутатсене регистрацилет.

Суйлав округĕсенче Сойуз Советне суйлама тата Националнăҫсен Советне суйлама уйрăм комиссисем пулаҫҫĕ. Кашни сойузлă республикăра, автономлă республикăра, автономлă облăҫра тата нацилĕ округсенче националнăҫсен Советне суйлама комиссисем тăваҫҫĕ.

Суйлав бӳллетенĕсене йышăнма, сасăсене шутлама тата пĕтĕм суйлав ĕҫне участкăра йертсе пыма участокри комиссисем тăваҫҫĕ. Комисси икĕ палатăн суйлавĕсене те йертсе пырат. Унта председател, унăн заместителĕ, секретар тата 4—8 член пулаҫҫĕ. Вĕсем пурте обчăлă организацисемпе ĕҫсыннисен обшчестви представителĕсем, вĕсене районри совет ҫирĕплетет.

Комиссисене чи лайăх ҫынсене, парти ĕҫĕшĕн хастарлăн кĕрешекенсене ҫеҫ суйламала. Клас тăшманĕсем комиссине хăйсен ҫыннисене кĕртме тăрăшаҫҫĕ. Пирĕн массăлă ĕҫе сарса йамала.

Йут патшалăхсенче суйлав комиссисене капиталиссен представителĕсем ҫеҫ кĕреҫҫĕ, вĕсем ĕҫхалăхĕсен кандидачĕсене суйлассине чăрмантарас майпа тĕмле ĕҫсем те тăваҫҫĕ.

Ĕҫхалăх депутачĕсен совечĕсем суйлама пултаракансен спискине тăваҫҫĕ. Вăл списка суйлав пуҫланиччен 30 кун малтан ҫакса хумала.

Спискăра йăнăшсем пулсан йе тата суйлама тивĕҫлĕ ҫыннах кĕртмен пулсан совета жалăбă памала. Совет жалăбăна виҫĕ кунта пăхса тухмасан, суда памала. Суд решени тĕрĕс шутланат.

Суйлавсем пуҫланаччен 30 кун малтан округри суйлав комиссийĕсене кандидатсене тăратмала. Калама ҫук пысăк ĕҫ. Ҫакăнта та ĕнтĕ парти, комсомол, совет, профсойуз организацийĕсен тăрăшса ĕҫлемеле. Клас тăшманĕ хăйĕн кандидачĕсене хатĕрлет. Вăл кандидатсем камшăн ĕҫлесси паллă. Пирĕн чи лайăх, Совет власҫĕшĕн кĕрешме пултаракан, парти ҫулйĕрне ҫирĕп тытса тăракан болшевикка тăратмала.

Коммунистсен партийĕ пире йертсе пырат. Вăл йертсе пынипе Совет Сойузĕ калама ҫук пысăк, историлĕ ҫĕнтерӳсем турĕ. Парти Советсен суйлавĕпе те йертсе пырат. Суйлав саккунĕ тăрăх коммунистсен парти организацийĕ кандидатсем тăратма пултарат. Унăн Тĕп комитечĕ ҫеҫ мар, вырăнти организацийĕсем те. Фашисла пичетре Совет Сойузĕнче коммунистсен партийĕ ҫеҫ кандидатсем тăратма пултарат, тесе елеклесе ҫыраҫҫĕ. Вăл, паллах, тĕрĕс мар. Вĕсем ĕҫхалăхĕнчен Сталинла Конституцин 141 статйине пытарма тăрăшаҫҫĕ. Профсойуз, кооператив, ҫамрăксен сойузĕсем, културлă обшчĕствăсем тата ытти организацисем те хăйсен кандидатне тăратма пултараҫҫĕ. Суйлав саккунĕн 57-мĕш статйине вуласа пăхсăр вĕсем. Унта обчăлă организацисемпе ĕҫхалăхсен обшчĕствисен аслă оргăнĕсем ҫеҫ мар, вырăнти организацийĕсем те тата предприйатисенче рабочисемпе служăшчисен, Хĕрлĕ ҫар чаҫĕсенче красноармейцăсен, колхозсенче колхозниксен пухувĕсем, совхозсенче совхоз рабочийĕсен пухувĕсем те Аслă Совета хăйсен кандидачĕсене тăратма пултараҫҫĕ.

Фашиссен патшалăхĕнче вара ĕҫхалăхĕн кун пек правасем ҫук. Унта фашиссем, капиталиссем, вĕсен агенчĕсем хăйсен кандидачĕсене суйлас тесе темле майсем те тупаҫҫĕ. Чылай патшалăхсенче кандидат тăратаканăн залог тӳлемеле.

Кашни рабочи, хресчен, служăшчи ҫавăн пек залог тӳлеме пултараймаст. Ахал мар ĕнтĕ Мускаври рабочисем йут патшалăхсенчи суйлав ҫинчен ҫапла калаҫҫĕ: „Гони монету".

Йут патшалăхсенче патшалăх чĕлхине пĕлмен ҫынна кандидата тăратма йурамаст. Вăл йĕрке патша Российинче Патшалăх Думине суйланă чухне те пулнă. Ҫапла вара вак халăхсем суйланма пултарайман.

Кандидатсене тăратни ҫеҫ сахал-ха. Вĕсемшĕн агитацилемеле, вĕсене ҫынсене пĕлтермеле. Пирĕн ĕҫхалăхĕсен организацийĕсен аллинче хаҫатсем, типографи, хут пур. Вĕсем хаҫатсем урлă, радио урлă, пухусенче агитацилеме пултараҫҫĕ. Йут патшалăхсенче хаҫатсем капиталиссен аллинче; хут, типографи те ĕҫхалăхĕн ҫук. Вĕсем кандидатсемшĕн агитацилеме те пултараймаҫҫĕ.

Суйлав расхучĕсене, пирĕн Совет Сойузĕнче патшалăх халăхран шыраса илмест. Унта пĕтĕм расхутсене халăх тӳлет.

Суйлав пирĕн пĕтĕм халăх йерĕсӳлĕ кунĕ иртет. Вăл ирхине 6 сехетре пуҫланса каҫхине 12 сехетре тин пĕтет. Ҫапла тунипе пур суйлама пултаракан та хăйĕн сассине пама пултарат.

Суйлакан, калăпăр Иванов. Вăл суйлав комиссине пырат те, колхозникăн билетне, йе урăх удостоверени кăтартат. Ăна бӳллетен параҫҫĕ. Иванов уйрăм комнăта кайса, бӳллетенре хăй суйлас кандидата хăварат, ыттисене пурне те хуратат. Вара бӳллетене йешчĕке йарат. Хутла пĕлмен ҫын хăй палакан ҫынна чĕнсе илсе суйлас текен ҫынна бӳллетенри спискăра хăварма хушат.

Ҫĕрле 12 сехетре суйлав комисси йешчĕксене уҫат те, сасăсене шутлат. Вара резултатсене округри комиссине йарат. Ҫав вăхăтра залра ĕҫхалăхĕсен представителĕсем, хаҫат работникĕсем тăма пултараҫҫĕ. Сойуз Советне суйлама йе Националнăҫсен советне суйлама панă сасăсене уйрăм шутлат.

Округри комисси округран Аслă Совета кама суйланине пĕлтерет.

Суйлавсем ҫывхараҫҫĕ. Йалсенче хуласенче мĕлйуншар ҫын Сталинла Конституцине, суйлав саккунне вĕренет.

Епĕр, Хĕрлĕ ҫарăн бойецĕсем, сире ку ĕҫре нумай пулăшма пултаратпăр. Пирĕн кунта парти работникĕсем, вăйлă пропагандиссем лекцисем вулаҫҫĕ, доклăдсем тăваҫҫĕ.

Пур ыйтусем тăрăх та сире ҫийĕнчех ответ парăпăр.

Суйлавҫăсен участкисенче

УЛАТĂР. Ҫтемас йалсоветĕнче суйлав участки 15 ҫĕрте пулат. Суйлавҫăсен спискисене хатĕрленĕ.

Суйлавҫăсем кашни участкăрах „ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламали Положенине" вĕренеҫҫĕ. Кружоксенче заңатисем 5-шер кунта пĕрер пулса иртеҫҫĕ.

8-мĕш номĕрлĕ хăма ҫуракан савăтра кружок руководителĕсен семинарĕ пулса иртрĕ.

Ан. Иванов.

Суйлас йĕркесемпе паллаштармаҫҫĕ

ТРАК. Мăн Шетмĕ йалсовечĕ суйлавҫăсен спискисене туса хатĕрленĕ. Анчах суйлавҫăсене ССР Сойузĕн Аслă Советне суйлас йĕркесемпе паллаштарма тытăнман.

Парăнтăк йалĕнче кружок уҫасси ҫсра та ҫук. Ҫентабĕрĕн 24-мĕшĕнче суйлав Положенине сӳтсе-йавас тесе пуху пухрĕҫ. Пухура мĕн пурĕ те 22 ҫын анчах пулчĕҫ. Суйлав саккунĕ ҫинчен ним ăнлантарни те пулмарĕ.

А. Кочков.

Китайри вăрçă

Шанхай фронтĕнче октябрĕн 2-мĕшĕнче нимĕнле пысăк улшăнусемех те пулман.

Лодйаң йалĕпе Љухаң шоссе çулĕ хушшинчи участкăра Китай çарĕсем кăштах хĕвеланăç йенеле чакнă. Љупзйахан йалĕн районĕнче китайцăсем Йапони пĕр тинĕс самољотне персе антарнă. Йапони зенитлă артиллерийĕ пиртĕ хытă персе тăнă пулсан та, Китай самољочĕсем Йанцзыпу районĕнче (Шанхайăн çурçĕр-хĕвел тухăçри кварталĕ) Йапони позицийĕсем çинче разведкăлă вĕçевсем тунă тата Динхай утравĕ çинче вĕçнĕ. Шанхай фронтĕнчи çапăçусенче Йапони çачĕсем нумай çухату тӳсни çинчен Йапони хаçачĕсем хăйсем те йышăнаççĕ.

Çурçĕр Китайри Йапони çарĕсем, Таңцзин—Пукоу чукун çулĕ тăрăх малала куçса, Шандуң провинцине тапăнса кĕнĕ. Дечжоу хулинчен 5 километр çурçĕреле çапăçусем пыраççĕ (Дечжоу хули Шандуң провинцин столицинчен—Цзинани хулинчен 100 километр çурçĕреле ларать).

Бейпин—Хаңкоу чукун çулĕпе пыракан Йапони çарĕсем Шицзйачжуанран 65 километр айаккарах тăраççĕ. (Шицзйачжуан—Хебей провинцине Шаңси провинципе çыхăнтаракан пала чукун çул узĕлĕ).

Шицзйачжуан патĕнче Йапони çарĕсен наступленине тем тесен те чарса лартма Нанкинран приказ килнĕ пирки, Китай çарĕсем Шицзйачжуан çывăхне пухăнаççĕ. Англи пичечĕн сведĕнийĕсем тăрăх, Шицзйачжуан районĕнче Китай çарĕсем 130 пине йахăн.

(ТАСС).

ИСПАНИРИ ФРОНТСЕНЧЕ

Тĕп фронт

Тĕп (Мадрид патĕнчи) фронтра республика позицисен хĕвелтухăçпе хĕвеланăçри флангсенче республика çарĕсем октябĕрен 2-мĕшĕнче фашиссен чылай атакисене аннăçлăн сирсе йанă (Тахо йуханшывĕнчен кантăрала, Толедо хулин районĕнче).

Хĕвелтухăçри фронт

Хĕвелтухăçри (Арагони) фронтра республика артиллерийĕ фашисла çарсене тийенĕ пуйăс çине пенĕ, вăл пуйăс Теруел станцинчен тухнă пулнă. Çак участкăри чукун çулне çĕмĕрсе тăкнă.

Октябĕрен 3-мĕшĕнче фашисла авиаци Валенси çине бомбăсем пăрахнă. 100 бомбăна йахăн пăрахнă. 30 çын вилнĕ, 150 аманнă. Ан пелччĕр тесе фашисла ескадрилйисенчен пĕри республика авиацин паллисене сарласа вĕçнĕ.

Çав кунах пăлхавçăсен çар карапĕ Барселона çине пенĕ. Артиллерирĕн пенĕ пирки вилекенсемпе аманакансем пулнă.

(ТАСС).

Польшари мĕн пур учителсен политикăлă забастовки.

ВАРШАВА, октябĕрен 4-мĕш. (ТАСС). Пайан Варшаври пуçламĕш тата вăтам шкулсенчи пĕтĕм учителсен политикăлă забастовки сиксе тухнă. Забастовкăна Польшă правителстви „Польшă учителĕсен Союзĕн" правленине салатса йанине хирĕçлесе пуçласа йанă.

Çавнашкалах учителсен забастовкисем Львов, Лодзи, Вильнă, Люблин тата Польшари ытти провинцилĕ хуласенче те пыраççĕ.

„Польшă учителĕсен Союзĕн" влаççем салатса йанă тесе пĕлтернĕ правленийĕ Польшари хăйĕн мĕн пур уйрăмĕсем патне циркулйар салатнă, циркулйар Польшари учителсене çав союза пăхса тăма правителствă лартнă фашисла „попечител" распорйаженийĕсене пĕтĕмпех саботаж тума чĕнет.

Польшă учителĕсем массăлă забастовка туни политикăлă пысăк событи пулса тăрать, вăл Польшари вак-буржуалă интеллигенцин тĕп масси фашисла редакцине хирĕç политикăлă усă кĕрешĕве куçнине кăтартать.

Учителсен забастовкине Польшари рабочи массисем хĕрӳлĕн кăмăл тăваççĕ, забастовка тăвакан учителсене пулăшас тесе вĕсем мĕн пур рабочисен забастовкине пуçласа йама ыйтаççĕ.

Гуанси провинцинче троцкиссен загăварне тупса палăртнă

ШАНХАЙ, октябĕрен 3-мĕш. Хаçатсем Гуанси провинцинче троцкиссен загăварне тупса палăртни çинчен пĕлтереççĕ. Троцкиссем, Гуанси организацин Ĕçтăвкомĕн членĕ Ван Гун-ду гоминдан йертсе пынипе, выранти çарсене çурçĕре йанине усă курса влаçа улăштарма шутланă. Троцкисла организаци вăрă хурахсенчен тата ытти тĕттĕм çынсенчен тăнă. Ван Гун-ду пуç пулса тăнă организацин пĕтĕм членĕсене арçеленĕ (ТАСС).

Полуектăва ĕçрен кăларнă

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ „Чăвашкино" трестĕн управльайушчи пулнă К. И. Полуектăва ĕçрен кăлармала тунă.

Китай халăхĕ паттăрăн Йапони захватчикĕсене хирĕç кĕрешет. ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Китайри 29-мĕш çарăн хальхи тупписенчен пĕри. (Союзфото)

Хĕрлĕ йалавлă ансамбль Прагăра йулашки концертсем панă

Хĕрлĕ Çар йуррисемпе ташшисен хĕрлĕ йалавлă ансамблĕ октябĕрĕн 3-мĕшĕнче Чехословаки столицинче—Прагăра йулашки икĕ концерт панă. Икĕ концерчĕ те калама çук пысăк аннăçлăхпа иртнĕ.

Ирхине рабочисем вальли панă концерта 5 пин çын таран пынă. Хавасланса кайнă публика ансамбль участникĕсене чечексем ывăтса панă. Профсойуз организацисем вĕсене пысăк чечек çыххисем пырса тыттарнă. Концерт пĕтнĕ хыççăн пур çĕрте те „Сывă пултăр Совет Союзĕ!" тесе саламланă. Пĕтĕм зал, ура çине тăрса, „Интернационал" йурланă.

Йулашки иккĕмĕш концерт хыççăн публика ансамблĕн художĕствăлă руководителне Александрăв профессăра Прагăн пĕтĕм центăрти пайĕ урлă, гостиница патне çитиччĕнех ăсатса йанă.

ССР Союзĕн Чехословакири полпредстви хĕрлĕ йалавлă ансамблĕ хисеплесе пысăк банкет тунă. Банкетра Чехословаки министерствисенчен, театăрсенчен, художĕствăлă тата литературăлă организацисенчен, общĕствăлă организацисенчен питĕ нумай представителсем пулнă.

Октябĕрĕн 6-мĕшĕнче ансамбль Мускава тавăрăнать.

(ТАСС).

Хĕрлĕ йалавлă ансамбль йачĕпе йышăну тунă

ПРАГА, октябĕрĕн 3-мĕш. Ĕнер Прагă хулин пуçлăхĕ Хĕрлĕ Çар йуррисемпе ташшисен хĕрлĕ йалавлă ансамблĕ йышăннă. Вăл ансамбль коллективне—ССР Союзĕнчи Хĕрлĕ Çар представителĕсене чи ăшă тата чĕререн тухнă сăмахсемпе саламланă тата Чехословакине, уйрăмăнах Прагăна, йуратса пынăшăн тав тунă.

Каçхине Прагăри чи пысăк театр залĕнче концерт панă. Унта çурри ытларах рабочисем пулнă. Концерт питĕ пысăк çитĕнупе иртнĕ. Концерт вăхăтĕнче курма пынă халăх выльакансем çине чечексем ывăтнă. Концерт пĕтсен ансамблĕ тав туса нумай вăхăт чарăнмасăр хавасланса хĕрӳлĕн алă çупнă. Ку вăхăтра пĕтĕм зал „Сывă пултăр Хĕрлĕ Çар, сывă пултăр Совет Союзĕ" тесе кăшкăрнă.

(ТАСС).

Лондăнри ĕççыннисем Англи фашисĕсене отпор параççĕ

ЛОНДАН, октябĕрĕн 4-мĕш. (ТАСС). Ĕнер Лондăн хулин кăнтăрти районĕнче (Бермондси) 2.700 фашис маттанах палăртса хунă маршрутпа шестви тума пикеннĕ. Фашиссене хурал тăма 2.000 полицейскисене мобилизациленĕ пулнă. Анчах çав районра фашисăма хирĕç кĕрешекенсем нумай пуçтарăннă та, фашиссем кайас урамсенче баррикадăсем тунă. Фашисăма хирĕç кĕрешекенсене полици салатса йама хăтланни ахалех пулнă. Фашисăма хирĕç кĕрешекенсемпе полици хушшинче чылай тытăçусем пулса иртнĕ. Йулашкинчен вара полици фашиссене хăйсен маршрутне улăштарма хушнă хыççăн, вĕсем хăйсене никам кĕтмен, пушă урамсем тăрăх кайнă. Полици 111 çынна арĕсленĕ. Тытăçусем вăхăтĕнче 30 çын, вăл шутран 2 полицейски аманнă.

Лейборисла партин Лондăнри организацийĕ мĕн пур рабочисене фашисла шествине хирĕç контрдемонстраци тăвасси пирки тăхтама хушнă, анчах ăна пăхмасăрах, фашиссен шествине хирĕç тăма урама питĕ нумай халăх тухнă. Лондăнăн кăнтăрти районĕнче мĕн çĕрлеччĕнех фашисăма хирĕçле митингсем пынă, вăл митингсенче Англире фашисăма путарса лартма ыйтса резолюцисем йышăннă.

Миллионер-колхозсем çĕршерĕн шутланаççĕ

Виçĕ çул кайала „Большевик" колхоз (Ленинабад районĕ, Таджик ССР) миллионер пулса тăнă. Ун чухне колхозниксене кашни ĕçкунĕшĕн пилĕк тенке йахăн укçа валеççе панă. Ку вăл Совет Союзĕнче мĕлйун тенкĕ тытакан пĕрремĕш миллионер-колхоз шутланнă.

Аслă Социалисăмлă революцин XX ç. тултарнă тĕле пĕчченн-пĕччен мар, çĕршер колхозсем миллионерсен ретне тăчĕç. Вĕсен хисепĕ çĕрмамăк акса тăвакан районсенче пуринчен те ытларах.

Таджикистанра иртнĕ çулта миллионер колхозсем 24 пулнă. Кăçал вĕсен хисепĕ çĕре çитет. Киргизинче миллионер-колхозсен хисепĕ 12 пулнă, халĕ аллăна çитрĕ. Азербайджанра пĕлтĕр миллионер-колхозсем 27 пулнă, халĕ ĕнтĕ вĕсен хисепĕ икĕ хут ӳсет. Узбек ССРеспубликĕнче миллионерсен ретне 55 колхоз кĕреççĕ.

Колхозниксен пурнăçĕ пуйан та культурăлă пулса тăчĕ. Сталин йачĕпе таракан колхозра. (Красноармейск районĕ, Краснодар крайĕ) пĕлтĕр пĕтĕм вăтам тупăш колхоз килĕ çине 1,590 тенкĕ тивнĕ. Кăçал вăл тупăш 4.131 тенке çитиччен ӳсет. Иртнĕ çулта мĕн пур тупăш 4 мĕлйун тенкĕ туса илнĕ. „Коминтерн" колхозра (Таджикистан) ĕçкунĕ çине 22-шер тенкĕ валеççе панă. Киргизинче „Интернационал" ертелри (Ошск районĕ) колхозник Азим Йусупăв иртнĕ çулта хăйĕн семйипе 27 пин тенкĕ ĕçлесе илнĕ. Кăçал семйе 50 пин тенкĕрен кайа мар илет.

Миллионер колхозсем хуçалăхлă тата культурăлă калама çук пысăк строителствă тăваççĕ.

Колхозсем ӳсе тĕрекленеççĕ, вĕсенчи çынсем те ӳсеççĕ. Кăçал 3 мĕлйун тенкĕ тупăш илекен „Луч Востока" ертелре (Алма-Ата облаçĕ) Маликăв йулташ нумайах та пулмасть рйадовой колхозник шутланнă. Хальхи вăхăтра Маликăв йулташ агрономи факультетне пĕтерсе тухать. Вăл киле пырассине колхозниксем чăтаймасăр кĕтеççĕ, вĕсем ăна колхоз председателĕ тума палăртса хунă та ĕнтĕ. Çав ертелри колхозник Березовски йулташ хальхи вăхăтра МТС директăрĕ пулса ĕçлет. Рйадовой колхозниксем — Сильуков, Йовикăвă тата Коновалăв йулташсем аслă шкултан вĕренсе тухнă, халĕ вĕсем хăйсен тăван колхозĕнче агрономсем пулса ĕçлеççĕ.

Колхозсен çĕнтерӳвĕсем калама çук пысăк. Вăл çĕнтерӳсене фашисăмăн троцкисла-бухаринла агĕнчĕсемпе, буржуалă националиссемпе тата халăхăн ытти тăшманĕсемпе хайаррăн кĕрешсе çĕнсе илнĕ. Çав çĕнтерӳсем—Ленин—Сталин партийĕ аслăн йертсе пынипе йалхуçалăхне социалисăмла реконструкциленин результачĕ.

Паттăрла ĕç

Глинки йалĕнче (Михайлăв районĕ, Рйазаң облаçĕ) пушар тухнă. Икĕ çурта вут хыпнă. Пĕри Михайлăв хулинчи пушарпа кĕрешекен командă бойецĕн В. Челноков йулташăн пӳрчĕ пулнă. Пушар тухнă вырăна Михайлăв хулинчи пушарпа кĕрешекен команди çитсе пушара айаккала хыпса илессине чарса лартнă. Пушара сӳнтернĕ чухне Челноков йулташăн хăйĕн çуртне вут хыпса илнĕ, унăн арăмĕ пурлăхсене çăлма килне тархасласа чĕннĕ пулин те, пушара тĕппе сӳнтериччĕнех постран кайман. Вăл куна хăйĕн ĕçри парăмĕн çулĕ тӳрĕлĕхне кăтартнă. Челнокован пӳрчĕ, пурлăхĕсем тата сĕтел-пуканĕсем пĕтĕмпех çунса кайнă.

Челноков йулташа паттăрла ĕç тунăшăн ССР Союзĕн Шалти Ĕçсен Халăх Комиссарĕ патшалăх хăрушсăрлăхĕн генеральнăй комиссарĕ Йежов йулташ приказĕпе хăйĕн йатне çырнă сехетпе тата 1000 тенкĕ укçапа парнеленĕ. Çав вăхăтрах, тата Челноков йулташа пурлăх тупанас ĕçре пулăшу пама ыйту лартнă.

(„Известия").

ССР Союзĕн полпредне Славуцки йулташа Йапони императăрĕ йышăннă

ТОКИО, Октябĕрĕн 4-мĕш (ТАСС). Домей Цусин агенстви пĕлтерет: октябĕрĕн 4 мĕшĕнче Йапони императăрĕ ССР Союзĕн Йапонири полпредне Славуцки йулташа хисеплесе ирхи апат тунă. Апат хыççăн императăрпа Славуцки йулташ хушшинче кĕске калаçу пулса иртнĕ.

ХРОНИКĂ

— Контрактаци тăрăх сутăн илекен ăратлă çамрăк выльăхсемшĕн тӳлемели контрактаци договăрĕсенче йышăннă хаксене пăсса, Саратăв облаçĕн ĕçтăвкомĕ тата ССР Союзĕн Çĕрĕç халăх комиссариачĕ контрактаци иртернĕ чухне хăйсен пĕрйенлĕ решенийĕсемпе договăрсенче йышăннă хаксене чакарса хунă. Союз прокуратури тăратнипе, ССР союзĕн халăх Комиссарĕсен Совечĕ çак çулхи сентябĕрĕн 11-мĕшĕнче çав постановленисене, вĕсем саккуна хирĕçле тата контрактаци договăрĕн çирĕплĕхне пăсаççĕ тесе, пăрахăçа кăларнă. ССР Союзĕн Çĕрĕç халăх комиссариатне Саратăв облаçĕнче колхозсенчен, колхозниксенчен тата йединоличниксенчен контрактаци тăрăх сутăн илнĕ çамрăк выльăхсемшĕн договăрсене тунă кунхине вăйра пулнă хаксемпе тӳлесе татма хушнă.

(ТАСС).

Донбасри горняк-стахановцăсен сльочĕ умĕн

СТАЛИНО, октябĕрĕн 4-мĕш. (ТАСС). Октябĕрĕн 6-7-мĕшĕсенче Донбасăн виçĕ центрĕнче—Сталинора, Макейĕвкăра тата Горловкăра Донбасри мĕн пур горняк-стахановцăсен сльочĕ уçăлать. Нормăсене нумай иртерсе тултаракан вунă пин ытла шахтăрсем сльот делегачĕсен мандатне илнĕ. Сльота хутшăнса ĕçлемели правăна, çавăн пекех, шахтăсен малта пыракан командирĕсем пине йахăн илнĕ. Çĕршывăн йатлă çыннисене, кăмрăкшăн кĕрешсе чапа тухнă Алексей Стахановăва, Никитă Изотăва, Мирон Дӳканăва, çавăн пекех пĕррĕмĕш класлă кăмрăк маçтăрĕсене, çулталăк нормисене халех икшер хут иртерсе тултарнă 318 çынна сльота пыма уйрăмăн чĕннĕ. Сльота кăмрăк тупас тĕлĕшпе иртнĕ 9 уйăх планне тултарнă тата иртерсе тултарнă шахтăсем те представителсем йараççĕ. Ун пек шахтăсем Донбасра 25.

„Артемуголь" трест (Горловкă) шахтисенчен делегатсем пуринчен те ытларах пулаççĕ. Горловкă хулинчен сльота 500 делегат ытла кайаççĕ, вĕсем хушшинче çулталăк нормине икшер хут тултарнă горняксем 90 çын. Никитă Изотăв, Степаненко, Артухăв т. ыт. пек паллă çынсем пăхса ӳстернĕ „Кочегаркă" йатлă шахтăри стахановцăсем мандатсем нумай илнĕ. „Донбассантрацит" трестăн шахтисем сльота питĕ нумай делегатсем йараççĕ, унта 430 горняк сентябĕр уйăхĕнче икшер нормă ытла тултарнă.

Сльотчен йулнă кунсенче Донбас горнякĕсем çĕнĕрен чаплă рекордсем тăваççĕ. „Красная звезда" шахтăри (Чистаково) врубовой машинис Фролов йулташ талăкри нормăна йаланах пилĕк—пилĕк çурă хут иртерсе тултарать. Тăхăр уйăх хушшинче вăл икĕ çулталăк нормине тултарнă ĕнтĕ, пĕтĕмпе 13 пин тенкĕ ĕçлесе илнĕ. Сентябĕр уйăхĕнчи заданине вăл 377,6 процент тултарнă. „Макеевуголь" трестри машинис Андрӳшкин йулташ кăтартулă ĕçлет, вăл икĕ çулталăк нормине тултарнă.

Халăх тăшманне Секачова персе пăрахмала тунă*)

Чăваш АСС Республикĕнчи Аслă судăн специальнăй коллегин выранĕсене тухса суд тăвакан çессийĕ çак кунсенче Кувакинă йалне кайса халăх тăшманĕн Секачовăн контрреволюцилĕ ĕçне пăхса тухрĕ. ПСК(б)П Кувакинă райкомĕн секретарĕ пулса ĕçленĕ чухне Секачов фашисла шпионсемпе—Погребинскипе, Суворовскипе тата Железнякпа тачă çыхăну тытнă, йалхуçалăхĕнче контрреволюцилĕ политикăна пурнăçа кĕртсе пынă.

Судра вуншар свидетелсенчен ыйтса тĕпченĕ хыççăн, Секачовăн контрреволюцилĕ сăтăрлă ĕçĕ тăрă шыв çине тухнă. Вăл, çав халăх тăшманĕ Секачов, Кувакинă районĕнче хуçалăх, культурă тата идеологи фронтĕнче контрреволюцилĕ метăдсемпе сăтăр туса пураннă: колхозсенчи пусуçаврăнăш йеркине йурийех пăтратса йанă, колхозсенчен саккунсăр налогсем пуçтарнă, патшалăх пурлăхне салатнă, колхозсене шалтан ишĕлтерме пикеннĕ. Патшалăх укçи-тенкипе парти райкомĕпе райĕçтăвком çуртĕнче ĕçкĕ-çикĕ туса, партипе совет активне пăсса йанă т. ыт. Çавсене туса вăл, ĕççыннисем умĕнче партипе совет влаçĕн авторитетне çухатасшăн, халăха совет влаçĕпе хирĕçтерсе йарасшăн пулнă.

Суд Михаил Васильевич Секачова халăх тăшманĕ тесе персе пăрахма пригăвăр йышăннă.

*) Сентябĕрĕн 27-мĕшпе 28-мĕшĕнче тухнă „Чăваш Коммунĕ" хаçата пăхăр.

Чăваш АСС Республик Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн октябĕрĕн 1-мĕшне кĕрхи çĕртме сухаласси мĕнле пынине кăтартакан

СВОДКИ

РАЙОНСЕМ	Плана тултарнă процентпа	Вăл шутран трактăрсемпе сухаланă: План тăрăх гектарпа	Плана тултарнă гектарпа	Плана тултарнă (процентпа)
Улатăр	30,1	6600	3225	48,9
Елĕк	27,2	9600	2377	24,8
Патăрйел	27,9	10780	5461	50,7
Вăрнар	37,5	10450	6058	57,9
Йĕпреç	32,1	8000	3380	42,3
Ишлей	38,4	9300	4473	48,1
Канаш	32,2	7500	3040	40,5
Куславкка	30,9	9965	2924	29,3
Кувакинă	73,4	10750	1722	16,0
Хĕрлĕ Чутай	23,9	—	—	—
Сĕнтĕрвăрри	49,2	—	—	—
Пăрачкав	29,4	9000	3901	43,3
Турхан	10,8	—	—	—
Тутаркас	35,1	7960	5265	66,1
Трак	35,6	11570	4384	37,9
Вăрмар	23,9	14000	3523	25,2
Çĕрпӳ	39,1	13000	4174	32,1
Шупашкар	62,2	7500	2101	28,0
Шăмăршă	12,3	—	—	—
Шăхасан	54,5	10900	4066	37,3
Шăнкăртам	49,4	—	—	—
Çĕмĕрле	31,8	—	—	—
Йетĕрне	56,9	—	—	—
Йелчĕк	49,9	14030	7410	52,8
Тăвай	60,4	8495	5260	61,9
ЧАССР-пе	38,0	179400	66288	36,9

Шупашкарти Трубный овраг

Урамĕнчен сентябĕрĕн 25-мĕшĕнче кĕсре çухалнă

Тĕсĕ—çутă турă, малти урисене кантрапа тăланă, хăлхи вĕ, ĕсем çурăк, малти сылтăм ури уксахлать.

Пĕлекенсен çак адрĕспе пĕлтермеле:

Шупашкар, Трубный овраг, 25 № çурт Березнева.

Мăн Сĕнтĕр кĕтĕвĕнчен сентябĕрĕн 29-мĕшĕнче

Ĕне çухалнă

Тĕсĕ—хура, иккĕ пăруланă, вырăнти йăх.

Пĕлекенсен çак адрĕссемпе пĕлтермеле: Мăн Сĕнтĕр, Тутаркас р. Вăтам шкул О. Димитрийĕвăна, йе Шупашкар, Базарнăйа урамĕ 43. Г. Д. Димитрийĕва. Пĕлтернĕшĕн укçа параççĕ.

СУД

Колхоз пурлăхне çаратакансем

ÇĔМĔРЛЕ (хамăр корр.). Турханти „Комбинат" колхоз 1932—34 çулсенче районта примерлă колхоз пулнă. Уйрăмăнах пыл хурчĕ ĕрчетес йенĕпе лайăх ĕçленĕ. Анчах колхоза йертсе пынă çĕре йурăхсăр çынсем кĕрсе кайнипе, иртнĕ çулта колхозра çав тери ирсĕр ĕçсем пулса пынă. Колхоз председателĕ Ф. Ильгачкин хăй тавра сăтăрçăсене пухнă, вĕсемпе пĕрле йаланах ĕçкĕ-çикĕ тунă. Çакна пула ĕнтĕ колхозăн уйри ĕç кайа йулса кайнă, фермăсенче хуçасăрлăх пуç пулнă.

1936 çулта тырпула вăхăтра пуçтарса кĕртеймен пиркийех, колхоз патшалăх умĕнчи парăмсене вăхăтра парса татайман. Колхозниксене тырă ĕçкунĕсем тăрăх шутласа мар, кам мĕн чухлĕ илме ĕлкĕрнĕ, çапла валеçнĕ. Капла туни нумай колхозниксене уламсăр, тырăсăр тăратса хăварнă. Ку çеç те мар-ха. Бригадирсем, кладовщиксем (Павлăвпа Куçмин) тырăсемпе улмăсене йурийех çĕртсе йарса, çуркунне колхоза пысăк йăварлăх умне тăратасшăн пулнă. Çĕрулми хумали подвалсене йурийех шыв йухса пымали вырăнсене тунă. Çапла икĕ подвалта 296 центнер çĕрулми çĕрсе кайнă. Амбарсем йурăхлă пулман, çавăнпа та 5 центнер клевĕр вăрри, сĕлĕ т. ыт культурăсем йурăхсăра тухнă, 20 лав кĕлте çĕрсе кайнă т. ыт. те. Колхоз председателĕ пулнă Ильгачкин айăпĕпе пăсăлнă пылран кăвас туса, пысăк тупăш илни укçине хăйсен кăсйине чикнĕ.

Анчах çак ирсĕр ĕçсене ревкомисси председателĕ В. Петрухин колхозниксенчен пытарса пураннă. Вăл Ильгачкинпа пĕр шухăшлă пулса йаланах ĕçсе çӳренĕ. Петрухин партипе совет влаçне хирĕç елек сарнă, комсомол организацине пĕтерсе лартма тăрăшнă т. ыт. те.

Çак ĕçе сентябĕрĕн 26—27—28-мĕшĕсенче, Чăваш АССР Аслă сучĕн вырăна тухса çӳрекен çессийĕ пăхса тухнă хыççăн, колхоз председателĕ пулнă Ильгачкинпа ревкомисси председателĕ пулнă Петрухина 5-шер çуллăха, Куçмин кладовщикпа Гр. Павлăв бригадира—2-шер çуллăха тĕрмене хупмала пригăвăр йышăнчĕ.

Курма пынă çынсем пригăвăра ырларĕç.

Хар. Лисин.

Ответлă редактăр заместителĕ И. П. ПАВЛОВ—ПИНЕР

Чăвашторга кирлĕ

Аслă бухгалтĕр заместителĕ
Бухгалтĕр ревизорсем тата инструктăрсем
Районсенчи уйрăмсенче ĕçлеме аслă бухгалтĕрсем.

Çак адрĕспе ыйтса пĕлмеле:
Шупашкар, Ленин урамĕ 11 № çурт аслă бухгалтĕра.

Чăвашдреврăн хăма çуракан савăчĕсем
Хăма çурса пама
заказ параканĕн йăвăçĕпе
ЗАКАЗ ЙЫШĂНАÇÇĔ

Пĕр кубометр йăвăça çурнăшăн савăт условийĕсене шута илсе 10 тенкĕрен пуçласа 15 тенкĕ таран илеççĕ.

3—3 ЧĂВАШДРЕВ.

Чăваш Совет писателĕсен Союзĕн

уйăхра пĕрре тухса тăракан илемлĕ литературă, критикă, искуствă журналĕ

„СУНТАЛ"

(14-мĕш çул тухать)

1937-мĕш çулхи июль уйăхĕнчен пуçласа „Сунтал" журнал Чăвашсен Патшалăх Издателствинчен Чăваш совет писателĕсен Союзĕ аллине куçрĕ. Малашне, „Илемлĕ литературă" журнал тухма пăрахнă пирки, чăваш совет писателĕсемпе поечĕсем, драматургĕсем çырнă чи паха художĕствăлă произведенисем пурте „Сунтал" журналра пичетленсе тăраççĕ.

„СУНТАЛ"
малашне вăхăтра тухса тăма пуçлать.

„СУНТАЛ"
журнала писмоносцăсем тата почтă агентсвисем урлă, почтă уйрăмĕсенче тата Шупашкарти „Союзпичет" урлă
çырăнса илме пулать.

Журнал хакĕ:
Çулталăка—12 тенкĕ
6 уйăха — 6 тенкĕ
3 уйăха — 3 тенкĕ
Уйрăм номĕрĕн хакĕ 1 тенкĕ.

Редакци адрĕсĕ: г. Чебоксары, Дом Печати, ред. журнала „Сунтал"

2—2

„Чăваш Коммунĕ" çырăнса илмели хаксем; 12 уйăха—30 т., 6 уйăха—15 т., 3 уйăха—7 т. 50 пус, 1 уйăха —2 т. 50 пус. Алçырăвсене кайала памаççĕ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 729. Гор. Чебоксары, Типография № 1 Чувашгиз. Заказ № 1923. Тираж 11564. ф. 58—92 см. 1—1 п. л.